**МИНИСТЕРСТВО ПРОСВЕЩЕНИЯ РОССИЙСКОЙ ФЕДЕРАЦИИ**
**Министерство образования и науки Чувашской Республики**
**Администрация Красночетайского муниципального округа**
**МБОУ «Мижеркасинская ООШ»**

| РАССМОТРЕНО | СОГЛАСОВАНО | УТВЕРЖДЕНО |
|---|---|---|
| Педсоветом | ШМО учителей | Врио директора школы |
| | | А.В. Лукин |
| Протокол № 1 от «30» августа 2025 г. | Протокол № 1 от «30» августа 2025г. | Приказ № 21-В от « » августа 2025 г. |

# РАБОЧАЯ ПРОГРАММА

(ID 2971211)

**учебного предмета «Литературное чтение на родном (чувашском) языке»**

для обучающихся 1-4 классов

**с.Мижеркасы 2025г**

## ЛИТЕРАТУРА ВУЛАВĔ

## КЛАСС ТУЛАШĔНЧИ ВУЛАВ ÇИНЕ ТАЯНСА ПУПЛЕВЕ АТАЛАНТАРАССИ

Литература вулавĕн урокĕсем 1 класра пуçланаççĕ те 4 класс таранччен тăсăлаççĕ. Пĕрремĕш класра пĕрремĕш çур çулта, ачасен вулав хăнăхăвĕсем йĕркеленсе çитеймен пирки, урокра усă курмалли тĕп меслет- хайлавсене итлесе йышăнасси. Вĕрентĕвĕн тĕп тĕллевĕ - ачасене литература хайлавĕсемпе кăсăклантарса ярасси, илемлĕ хайлавсене итлесе ăнланма, ăса хывма вĕрентсе пырасси. Чăн литература вулавĕ, ачасем кăшт-кашт вулама хăнăхсан, иккĕмĕш çур çулта пуçланать.

Пуплевпе шухăшлавăн тĕп ĕç-хĕлĕсенчен пĕри пулнăран вулав пуçламăш классемшĕн пысăкран та пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вăл кĕçĕн çулхи шкул ачине ăнăçлă вĕренме, ырă кăмăл-туйăмлă ӳсме, ăс-тăнне пур енлĕн аталантарма пулăшмалла. Литература вулавĕн урокĕсен тĕп тĕллевĕсем çаксем: вĕренекенсен пирвайхи вулав ăслайне, унăн тĕрĕслĕхĕпе хăвăртлăхне, ăнланулăхĕпе палăртулăхне куллен лайăхлатасси; ачасене хайлава туллин ăнланма хăнăхтарасси, вĕсен ырăпа усала уяс туйăмне, илем сисĕмне амалантарасси, тĕнче курăмне анлăлатасси; текстпа ĕçлеме вĕрентесси, кĕнекене харкам тĕллĕн вулама хавхалантарасси.

Паянхи пурнăç литература вулавĕ умне çĕнĕ задачăсем кăларса тăратрĕ: ача çитĕнсе çитнĕ тĕле мĕнпур этемлĕхĕн çырулăх пуянлăхне ăнланма, хисеплеме, унпа киленме пултартăр; тĕнче литературин пӳлминче чăваш литературин тӳпи те палăрмаллах пысăк пулнине ăнкартăр; хайлава туллин ăнланма ăна хайланă чухнехи евĕрех йывăррине асăрхатăр; кирек хăш хайлав та пысăк шыравра çуралнине, вăл çыравçă пуçĕнче шăранса калăпланнă, шухăшласа кăларнă япала иккенне тĕшмĕрттĕр, хăй тсе хайлав ĕçне явăçма сĕмлентĕр; ача-пăча ăс-тăн тĕлĕшĕнчен çеç мар, кăмăл-сипетипе туйăм-сунăм тĕлĕшĕнчен те тасалса пуянлантăр.

Литераура вулавĕ пуçламăш шкулăн чи пысăк икĕ тĕллевне пĕрлĕхлĕн татса пама май парать: пĕрремĕшĕнчен, вулама тата кĕнекене юратма хăнăхтаратӳ, иккĕмĕшĕнчен, литература хайлавне ăнланма тата унпа ĕçлеме вĕрентет. Асăннă тĕллевсемпе задачăсене программăра палăртнă вулав материалне тĕпе хурса пурнăçламалла.

Вуламалли материалта чăваш литература чĕлхин виçĕ стилĕ сăнланать: илемлĕ литература стилĕ, ăслăлăх стилĕ, публицистика стилĕ. Кунсăр пуçне унта тăван халăх сăмахлăхне те самаях кĕртнĕ. Кашни класăн вулав программинчех çакăн пек пайсем палăртнă:

1) вулав карти тата пăхмасăр калама вĕренмелли хайлавсем; 2) вулав ăслайĕсемпе хăнăхăвĕсем, текстпа ĕçлесси, çыхăнуллă пуплев; 3) класс тулашĕнчи вулав.

Вулав карти. Класра хăçан мĕн вуламаллине палăртнă чух хайлавсен шухăш-туйăм пуянлăхне, темине, илем пахалăхне тата май килнĕ таран çулталăк вăхăчĕпе хронологи паллисене шута илмелле. Çакăн пек туни вулава пурнăçпа çыхăнтарма, унăн паллăрах енĕсене çителĕклĕ таран çутатма май парать, ĕренекенсене илемлĕ литература, публицистика тата ăслăлăх хайлавĕсене хăйсем тĕллĕн вуласа ăнланма, çапла вара вăтам шкулта литературăпа историне, ытти ăслăлăх никĕсĕсене системăллă ăса хывма хатĕрлет.

Шкул ачине кĕнекепе туслашма, унпа кăсăкланма пулăшас, пуплевне пуянлатас, илем туйăмне аталантарас, ырăпа усала уяма вĕрентес тĕлĕшпе литература вулавĕ тата класс тулашĕнчи вулав валли палăртнă илемлĕ литература темисем(«Халăх пултарулăхĕ», «Паллă чăваш писателĕсем», «Тăван çут çанталăк ӳкерчĕкĕсем» т.ыт.те) уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вулав материалне суйланă чух ачасен ӳсĕмне шута илни, вулав кĕнекине вĕсен шухăш-кăмăлне пĕлсе йĕркелени, хайлавсем пĕлӳлĕх тĕлĕшĕнчен пуян пулни çак ĕçре ăнăçу кӳмелле.

Ачасем хăйсем чăваш пулнăран ан вăтанччăр, ыттисем хушшинче хăйсене катăк ан туйччăр тесен вĕсене Çĕр чăмăрĕ çинче нумай тĕрлĕ халăх пурăнни, чăваш халăхĕ чылай йышлă халăхсенчен пĕри пулни çинчен вуласа пĕлме май памалла. Тăван чĕлхене те вĕсем хисеплеччĕр, юратчăр, унпа усăмлă та таса калаçма хăнăхчăр.

Халăхăмăр тĕпленсе пурăнакан вырăнсемпе, унăн ĕçĕ-хĕлĕпе анлăн паллаштарма вулав кĕнекисене илемлĕ литература хайлавĕсемсĕр пуçне ăста çырнă очерксемпе статьясен сыпăкĕсем кĕртни вырăнлă. Вĕренекенсем чăваш халăхĕ  Чăваш Республики тулашĕнче те йышлăн пурăннине пĕлччĕр.

Вулав кĕнекисенче Чăваш Республикин символĕсем — унăн Ялавĕ, Гербĕ, Гимнĕ пулмалла. Чăваш Республикин тĕп хули Шупашкар пулнине, хула сăн-сăпатне кĕçĕн çулхи шкул ачи хăй кайса куриччен чылай маларах вуласа пĕлме пултартăр, Çавăнпа пĕрлех вăл  Чăваш Республки Раççей Федерацине кĕнине, Раççейĕн патшалăх Ялавне, Гимнне, Гербне, унăн тĕп хулине Мускава сăнлакан текстсене те тупса вулайтăр.

Çырулăх, кĕнеке этемлĕхшĕн çав тери пысăк пĕлтерĕшлине, вăл чăннипех пĕлӳ çăл куçĕ пулниие шкул ачи туйса илтĕр тесен вулав кĕнекисене тĕрлĕ халăхăн çырулăхĕ пуçланса кайни çинчен калакан хайлавсем, çырулăха пуçарса янă çынсем çинчен юлнă аса илӳсемпе халапсем кĕртмелле. 3-4-мĕш классенче ачасем авалхи кĕнекесенчен (çав шутра Библирен, Коранран) илнĕ сыпăксемпе паллашма пултарччăр. Вĕсем хамăр халăх çырулăхĕн йывăр шăпи, çĕнĕ çырулăха пуçарса яраканĕ И.Я. Яковлев, унăн пулăшаканĕсем çинчен те вуласа пĕлме тивĕçлĕ.

Тӳрĕ чунлă, ырă кăмăллă,  вашават чĕлхеллĕ, чăлаха, чирлĕ çынна хĕрхенекен, ватта-вĕтте хисеплекен, ултава, чурăслăхпа хаярлăха, чунсăрлăха сивлекен çын пулса ӳсме вулав кĕнекисене кĕртнĕ юмахсемпе халапсем, шӳтсем, тĕрлĕ халăх çыравçисен хайлавĕсем пулăшĕç. Вĕренекенсен ăсĕ-тăнĕнче ĕç пурнăç тыткăчи пулни, наянлăхран намăсланасси яланлăха çирĕпленсе юлтăр.

Тĕнче уçлăхĕ вĕçĕ-хĕррисĕр, анчах этемлĕхĕн сăпки те, килĕ те - Çĕр чăмăрĕ кăна. Çут çанталăка юратма, ӳсен-тăрана, чĕр чунсене хĕрхенме-шеллеме, шăнкăртатса юхакан çăл куçа, тăрă кӳлле, ешĕл вăрмана, улăха, уй-хире вараламасăр, суранламасăр упрама, вĕсемпе типтерлĕ усă курма

вĕрентекен текстсем кĕçĕн çулхи шкул ачин вулав кĕнекисене ытлăн-çитлĕн кĕмелле. Кашни класăн вулав материалĕ вĕренекенсен ăс-тăнне, ырăпа усала уяс пултарулăхне, илем туйăмне, пуплевне, ĕçченлĕх сулăмне аталан-тарма пулăшмалла. Çакна пурнăçлама вуламалли хайлавсемпе кĕнекесен паха шухăшĕсем, чĕлхи, тытăмĕ майĕпен кăткăсланса пыни кирлĕ.

**I класс** пĕтернĕ тĕле ачасем чăвашсен паллă çыравçисен хайлавĕсене итлеççĕ-вулаççĕ, Чăваш ен çут çанталăкĕ çинчен калакан хайлавсемпе, ансат сюжетлă юмахсемпе паллашаççĕ. Ачасен вулавçă культури калăпланма пуçлать. Вĕсем илемлĕ текста чухлама, автор сăмахĕллĕ ӳкерчексем туса туйăма палăртма, хăй шухăшне вулавçă патне çитерме пултарнине ăнкарма пуçлаççĕ. Илемлĕ хайлавсемпе паллашнă майăн ачасем çак терминсен пĕлтерĕшĕсене тĕшмĕртме тытăнаççĕ: автор, илемлĕ текст, сăвă, калав, юмах, рифма, ритм, чăваш халăх сăмахлăхĕ. Кашни урокра хăйне евĕрлĕ кăмăл-сипет никĕсĕсем сăмсаланччăр: ыр кăмăллăх, тивĕçлĕх, хастарлăх, хăюлăх, яваплăх, пĕр-пĕрне пулăшасси, çывăх çынсемшĕн тăрăшасси.

**II класра** вĕренекенсем çулталăк вăхăчĕсене, пĕтĕм халăх уявĕсене сăнлакан, тăван тавралăх илемĕ тата ăна упрасси çинчен калакан хайлавсене вулаççĕ. Илемлĕ литература, ăслăлăхпа публицистика тексчĕсемсĕр пуçне IIкласра ачасене чăваш халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсемпе, ытти халăх çыравçисен пултарулăхĕпе те паллаштармалла. Ку класра ачасене пуçламăш хут Чăваш Республикин Гимнне итлеттермелле, унăн текстне вулаттармалла.

Хайлавсем тематикăпа проблематика тĕлĕшĕнчен ачасене çывăх пулмалла: ачалăх, тăван çемьепе тăван-пĕтен пурнăçĕ, шкулта, çут çанталăк. Ку класра литература теорийĕ çинчен мĕн пĕлни тарăнланать. Ачасем проза, калав, хайлав темипе тĕп шухăшĕ çинчен терминсене асăнмасăрах пĕрремĕшле ăнкарусем туянаççĕ, çак терминсен пĕлтерĕшĕсене чухлама пуçлаççĕ: поэзи, проза, калав, портрет, юмор, монолог, диалог, танлаштару. Текстпа ĕçлемелли тĕп ыйтусем: «Мĕн çинчен вуларăмăр?», «Çакна мĕнле çутатнă?».

2 класра пуçласа ăслав çыру ĕçĕсем çыртарма палăртнă.

Малтанхи ăслав ĕçĕсем: тĕслĕхе евĕрлени, автор сюжетне тăсни, сюжетлă ӳкерчĕке сӳтсе явни т.ыт.те. Каярах чăн харкам ăславсем хайлама пикенмелле. Çав шутра: сăнани тата вуласа тухни тăрăх, çут çанталăк тĕрленчĕкĕсем, ваттисен сăмахĕсем тăрăх, юратнă чĕр чунсем çинчен т.ыт.те.

**3 класра** вуламалли хайлавсем чĕлхипе те, шухăшĕпе те кăткăсрах, вĕсен калăпăшĕ те пысăкрах. Ачасем илемлĕ литературăн тĕрлĕ жанрĕпе (калав, юмах, юптару, сăвă, ваттисен сăмахĕ, туптармăш, тупмалли юмах т.ыт.те) паллашаççĕ. Вулав урокĕсенче вĕсем Чăваш Республики, Раççей Федерацийĕ, вĕсен патшалăх символĕсем çинчен мĕн пелнине тарăнлатмалла. Çулталăк вăхăчĕсем мĕнлерех черетленнине сăнани çине таянса илемлĕ литература, ăслăлăх тата публицистика хайлавĕсем пулăшнипе вĕренекенсен пĕлĕвĕсене анлăлатмалла, çавăнпа пĕрлех вĕсен тăван тавралăха юратас, ăна упрама тăрăшас туртăмне вăйлатмалла. Ачасем çут çанталăкри улшăнусене кура этем ĕçĕ-хĕлĕ мĕнле улшăнса пынине асăрхаччăр, хăйсем те пултарнă таран

аслисене пулăшма тăрăшчăр. Тус-тăванлăхпа ыр кăмăллăх этеме темĕнле йывăрлăха та çĕнтерме май пани, курайманлăхпа хĕрхенӳсĕрлĕх çынна çын ретĕнчен кăларса тискерлетни çинчен калакан хайлавсем те ку класра тивĕçлĕ вырăн йышăнмалла.

Çавăн пекех, 3 класра тĕрлĕ халăх çыравçисен хайлавĕсемпе малалла паллаштармалла. Тĕрлĕ саманара тĕрлĕ халăхăн тĕрлĕ çыравçисем пĕр темăпа; пĕр авторах тĕрлĕ темăпа çырнă хай-лавсене танлаштарса, вĕсенче уçса панă илемлĕхпе кăмăл-сипет ыйтăвĕсене сăнаса ачасем литература тĕлĕшĕнчен те, пĕтĕмĕшле те аталанаççĕ. Ку ӳсĕмри ачасем кăмăл-сипет ыйтăвĕсем çинчен тарăнраххăн шухăшлама пуçлаççĕ. Çак ăнлавсемпе вĕсен сăл-тавĕсене палăртасси литература вулавĕ урокĕсенче ĕçлемелли тĕп ыйтусем: çемье тата общество, çемье тата халăх, çемье халăхăн пĕр пайĕ тата йаха малалла тăсмалли йыш; кил-йыш тата наци традицийĕсем; чăваш халăхĕн ывăлĕ-хĕрĕ Раççек культуришĕн тунă тава тивĕçлĕ ĕçсем; кулленхи пурнаçри куçа тăрăнман илем; сапăрлăх тата чурăслăх; хастарлăх тата хăравçăлăх; паттăрлăх тата сутăнчăклăх, вĕсен сăлтавĕсемле никĕсĕсем.

Ачасем литература жамрĕсем çинчен пĕлни анлăланать; вĕсем гомах, юптару, калав, былина, миф, пьеса, эпитет, пейзаж, сюжет терминсен пĕлтерĕшĕсене ăнкарма вĕренеççĕ. Халăх юмахĕсене, автор хайлавĕсене тишкернĕ майăн ачасем тăван халăх кăмăл-сунăмĕнчи чи курăмлă енсене: унăн ĕçченлĕхне, тараватлахне. сапăрлăхне асăрхаççĕ.

Литература темисемпе ăслав ĕçĕсем çырас хăнăхусем тарăн-ланмалла, çивĕчленмелле. IIIкласри ăслав çыру ĕçĕсен тĕсĕсем: ӳкерчĕк тăрăх сочинени, вуласа тухнă кĕнекене хакласа çырни, вуланă хайлав евĕрлĕ юмах ăслани т.ыт.те.

**4 класри** вулав материалĕн ытларахăшĕ — илемлĕ литература хайлавĕсем. Вĕсемсĕр луçне ку класра вулама ăслăлăх тата пуб-лицистика стилĕсен хайлавĕсене те сĕнмелле. Этемлĕх аваллăхĕ çинчен калакан статьясем, пысăкрах ĕçсен ачасем ăнланмалли сыпăкĕсем, авалхи мифсемпе легендăсем вулав материалне кă-сăклăрах тума пулăшĕç, вĕренекенсен тавра курăмне аталантарнипе пĕрлех вĕсене малалла ăнăçлă вĕренмелли никĕс хывĕç.

Ку ӳсĕмри ачасем тĕрлĕ типлă текстсене тарăнрах ăнланма пуçлаççĕ: проза, поэзи, драма. Çакă аслăрах классенче литературăна эпос, лирика, драма ушкăнĕсене уйăрса вĕренессин пуçламăшĕ пулса тăрать. Халĕ ĕнтĕ композиципе илемлĕ шалăш тĕлĕшĕнчен анлăрах, кăткăсрах хайлавсене тишкермелле. Çыравçăсен пултарулăхĕ, илемлĕх хăйне евĕрлĕхĕ, геройсем, проблемăсем çинчен шăл çемми пĕтĕмлетӳсем тутармалла. Ку класра çак терминсен пĕлтерĕшĕсене ăса хывмалла: повесть, идея (тĕп шухăш), фантастика, сăпатлантару (олицетворени).

Литература вулавĕн урокĕсенче ку класра Чăваш Республикин, Раççей Федерацийĕн çут çанталăкĕ, чĕр чун тĕнчи, унта пурăнакан халăхсем çинчен калакан хайлавсемпе паллашаççĕ, çакă вĕренекенсене аслăрах классенче географи вĕренме пулăшĕ. Тăван халăхăмăр тата ытти халăхсен аваллăхĕ çинчен калакан статьясем ачасене истори вĕренме никĕс хываççĕ. Паллă чăваш писателĕсен хайлавĕсемпе, ытти халăх çыравçисен сăввисемпе, калавĕсемпе паллашни вĕсене лнтературăна туллинрех вĕренме хатĕрлĕ.

Пурнăçа юратма, этеме хисеплеме, çут çанталăка, таврари илеме упрама, ырăпа усала уяма вĕрентекен хайлавсем IVкласра та тĕп вырăн йышанмалла. Ачасем пуç тавра явса шухăшламалли кăмăл-сипет проблемисем **халĕ** ĕнтĕ тарăнрах та кăткăсрах: патриотлăх. çынлăх, тивĕçлĕхпе яваплăх, çирĕп кăмăллăх тата çемçешкелĕх, пӳтсĕрлĕхпе икĕпитлĕх. Уроксенче çынсем хушшинчи кăткăс хутшăнусене тĕпчемелле, инкек-синкекрен сыхланмалли çул-йĕрсене шырамалла.

**Вулав ăслайĕпе хăнăхăвĕсене лайăхлатса пырасси,** вуланă хайлавăн шухăш -туйăм пуянлăхне ăнланасси, чĕлхен илемлĕх мелĕсене асăрхасси кашни вулав урокĕнчех малти вырăнта пулмалла. Вулав урокĕн ытларах пайĕ (30-35 минут) вулав хăнăхтарăвĕсем ирттерме, текстпа ĕçлеме каймалла. Вулав умĕнхи калаçу вуламалли текст вăратакан шухăш-туйăмпа тачă çыхăнтăр, ачасен текста вулас хастарлăхне ӳстерме, кăмăл-туйăмне çивĕчлетме пулăштăр, çапла вара вуламалли хайлава туллин ăнланма хатĕрлетĕр.

Вулав урокĕсенче çыру хăнăхтарăвĕсем те тăтăшах йĕркелемелле. Вĕсене ăслав (творчество) ĕçĕсене вĕрентессипе çыхăнтармалла. Чĕлхе урокĕсенче çеç çыртарни çителĕксĕр. Вулав урокĕсенче çакна асра тытни ăслав ĕçĕсем çырма вĕрентессине чылай çăмăллатать.

Ачасен урокри ĕç-хĕлне хавхалантарас, вулас кăмăлне вăйлатас тесе тĕрлĕ мелпе усă курмалла: вуланă хайлавсем, пурнăç сăнавĕсем çине таянса тĕрлĕрен вăйăллă хăнăхтару, ăслав ĕçĕсем ирттермелле (инсценировка туни, рольпе вулани, пĕр-пĕр сăнар ячĕпе каласа пани, унăн шăпи малашне мĕнлерех пулнине тавçăрма тăрăшни, çыхăнуллă калав туни т.ыт.те).

Вĕренекенсене ăс-тăн парас, сапăр ӳстерес тĕллеве ăнăçлă пурнăçлама литература вулавĕн урокĕсенче хайлавсемпе çеç ĕçлени çителĕксĕр: çак ĕçе çĕр-шыв пурнăçĕпе, харпăр ашшĕ-амăшĕн хуйхи-суйхипе, савăнăçĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе, ачасен кулленхи ĕçĕсемпе, шухăш- ĕмĕчĕпе çыхăнтармалла.

Вулама вĕрентес, ачасен вулав ăслайне лайăхлатас ĕçре вĕсен пурнăç сăнавĕсемпе усă курмалла. Вĕренекенсен тавра курăмне пуянлатас тĕллевпе вĕсене йăла е промышленность предприятине, çывăхри колхоза е фермер хуçалăхне экскурсие илсе каймалла, çут çанталăка, çынсен пурнăçне, çитĕннисен ĕçне сăнаттармалла.

Вĕренӳре ачасен ĕç-хĕлне, хутшăнăвĕсене те тĕрлĕрен йĕркелеме тăрăшмалла. Класпа, уйрăмшарăн, мăшăршарăн, пĕчĕк ушкăнсенче пурнăçламалли ĕçсем сĕнмелле. Çакă ачасен хутшăну действийĕсене ăнăçлăрах йĕркелеме пулăшать.

Литература вулавĕн урокĕсем тăван чĕлхе программинче палăртнă ытти уроксемпе, унсăр пуçне пуçламăш шкулти ытти предметсене вĕренессипе тачă çыхăнмалла: ку предметсем ачасен илем туйăмне, вĕсен ырă кăмăлне амалантарма, ăс-тăнне пур енлĕн аталантарма пулăшаççĕ. Çавăнпа пĕрлех вулав, ӳкерӳ тата музыка урокĕсем хушшинчи çыхăну ачасен илемлĕх хайлавĕсене ăнланас, хаклас пултарулăхне лайăхлатать, вĕсене тĕрлĕ енлĕн аталанма май парать.

Класс тулашӗнчи вулав пуҫламӑш класра ачана тӑван ҫырулӑх чӗлхипе усӑ курма хӑнӑхтарас, унӑн пӗлӗвӗсене анлӑлатас, ӑс-тӑнӗпе чун хавалне аталантарас ӗҫре питӗ пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Унӑн тӗп тӗллевӗ ─ вӗренекенсене ача-пӑча юратса вулакан хайлавсемпе анлӑн паллаштарасси, кӗнекесене юратма, харпӑр хӑй тӗллӗн вулама хӑнӑхтарасси.

Ача-пӑча кӗнекипе ӗҫлесси 1—4 классенче ытларах класс тулашӗнчи вулав урокӗсенче пулса пымалла. Программӑра ку ӗҫе йӗркелессин икӗ енне шута илнӗ: 1) мӗн вуламаллине, ачасене мӗнле йӗркепе тата мӗнле кӗнекесемпе паллаштармаллине кӑтартса панӑ; 2) ҫак кӗнекесене вуласа ачасем мӗнле пӗлӳсем, ӑслайсемпе хӑнӑхусем туянмаллине палӑртнӑ.

Класпа, юлташӗсемпе пӗрле е харпӑр хӑй тӗллӗн вуланӑҫемӗн ачасем кӗнекесемпе, вӗсен авторӗсемпе паллашаҫҫӗ. Класс тулашӗнчи вулав урокӗсене класри вулавпа килӗшӳллӗн йӗркелесен аван. Малтан ачасене паллӑрах писательсен пӗрешкел темӑпа ҫырнӑ темиҫе (2-4) кӗнекипе паллаштармалла, унтан сӗннӗ темӑна хӑйсем тӗллӗнех тӗрлӗ авторӑн ӑнланма ҫӑмӑл кӗнекисене суйлама хӑнӑхтармалла.

1-мӗш класра вӗренекенсен класс тулашӗнчи вулавне йӗркеленӗ чух уйрӑмах вӗсен вулав хӑнӑхӑвӗссмпе тавра курӑмӗ мӗнле аталаннине шута илмелле, ҫав вӑхӑтрах вулав тематикине анлӑлатма тӑрӑшмалла, чи пӗчӗккисем валли тухнӑ кӗнекесене паллама вӗрентмелле.

2-мӗш класра ачасем вӗрентӳҫӗ ертсе пынипе с вӑл сӑнаса тӑнипе тӗрлӗ темӑллӑ «шӑл ҫемми» кӗнекесене вулаҫҫӗ, ача-пӑча журналӗсемпе паллашаҫҫӗ.

3-мӗш класра вӗренекенсен ача-пӑча писателӗсен паллӑ хайлавӗсемпе паллашмалла, юмахӗ-халапӗсене вуламалла. Класс тулашӗнче вулама сӗннӗ авторсен йышӗ 15— 17-е ҫитмелле. Вӗсен шутӗнче чӑваш ҫыравҫисем ҫеҫ мар, ытти халӑхсен паллӑ писателӗсем те пулмалла. Кунсӑр пуҫне класс тулашӗнчи вулав урокӗсенче вӗренекенсене малтанхи классенчи пекех ача-пӑча хаҫат-журналӗпе паллаштармалла, вӗсен материалӗсене суйласавулаттармалла.

4-мӗшкласра вӗренекенсем те ытларах илемлӗ литература тата ӑслӑлӑх стилӗпе ӑнланмалла ҫырнӑ кӗнекесене вулаҫҫӗ. Вӗсенче этем пурнӑҫӗн илемӗ, унӑн чун хавалӗ сӑнланмалла. Тем те пӗр курса ҫӳренисем ҫинчен калакан кӗнекесемпе паллашасси ку ӳсемри вӗренекенсен класс тулашӗнчи вулавӗнче паллӑ вырӑн йышӑнмалла. Вӗсемсӗр пуҫне хальхи тата авалхи пурнӑҫа сӑнлакан повеҫсемпе калавсем, паллӑ ҫынсен кун кӗнекисемпе ҫырӑвӗсем, ачасем валли ятарласа ҫырнӑ биографийӗсем пулмалла. Урокра тӗрлӗрен пулӑшу кҫӗнекипе — словарьсемпе, пӗлкӗчсемпе (справочниксемпе), хаҫат-журналпа тӑтӑшах усӑ курма хӑнӑхтармалла.

Вӗренекенсене ача-пӑча кӗнекисемпе, хаҫат-журналпа куллен тӑрмашма хӑнӑхтарас тесен класри тата шкулти библиотекӑн ӗҫне тивӗҫлӗ йӗркелемелле.

1-мӗшкласра вулав кӗтесӗнче ачасемпе вуламалли кӗнекесен куравне (выставкине) кашни эрнерех ҫӗнетсе тӑмалла.

2-мĕш класра вуламалли кĕнекесене темăн-темăн ушкăнламалла («Тăван тавралăх», «Чĕр чунсем çинчен», «Çулталăк вăхăчĕсем» т.ыт.те). Кĕнеке куравĕсем, ятарлă сĕнӳ плакачĕсем ачасене кĕнекесенчен кирлине суйлама пулăшмалла.

3-мĕш класра вуламалли кĕнекесене çӳлĕк çине авторĕсене кура йĕркелесе тăратмалла. Ăслăлăх стилĕпе çырнă кĕнекесем уйрăм тăмалла. Кунтах вулама сĕннĕ кĕнекесен списокĕ, ачасем харпăр хăй тĕллĕн ĕçлемелли картотека пулмалла.

4-мĕшкласра вуламалли илсемлĕ литература тата ăслăлăх стилĕн хайлавĕсене çӳлĕк çине авторсен хушамачĕсене кура алфавит йĕркипе вырнаçтармалла. Пулăшу кĕнекисемпе хаçат-журналсем те ал айĕнчех пулмалла. Кунсăр пуçне ачасене кирлĕ сĕнӳсем, «Мĕн вуламалла» е «Вĕренӳ кĕнекинче кун çинчен çырман...» евĕр каталогсем хатĕрлемелле. Районти, хулари-ялти библиотекăпа ачасене иккĕмĕш вĕренӳ çулĕнче паллаштармалла. 3—4-мĕшкласра вĕренекенсен çывăхри библиотекăна хăйсем тĕллĕн çӳремелле. Вĕсене шкулпа библиотекăн пĕрлехи ĕçĕсене те явăçтармалла (литература уявĕсем, саспа вулани т.ыт.те).

Класри, класс тулашĕнчи вулав пуçламăш классенчи тăван чĕлхе программин ытти пайĕсемпе çыхăнмалла. Çавăнпа пĕрлех вулав урокĕсенче те чĕлхен тĕрлĕ енĕпе усă курма, тĕрĕс çырма, çут çанталăка сăнама, ĕçлеме, ӳкерме, музыкăна чухлама вĕрентекен уроксенче туянакан хăнахусемпе анлăн усă курмалла.

## ПУПЛЕВЕ АТАЛАНТАРАССИ.

Вулама-çырма вĕрентесси икĕ тапхăра уйăлать: пĕри—хатĕрлев тапхăрĕ, тепри - сас паллисемпе паллаштарнă тапхăр.

Вулама-çырма вĕрентмелли тĕп меслет - тишкерӳ-пĕрлештерӳ меслечĕ. Шкул ачисене вĕрентнĕ чух унпа туллин усă курмалла.

**ВУЛАМА-ÇЫРМА ВĔРЕНТЕССИ ХАТĔРЛЕВ ТАПХĂРĔ** ***(12 сехет)***

Хăнăхтарусем пурнăçланă май терминсемпе (пуплев, текст, калав, предложени, сăмах, сыпăк, пусăм, уçă сасă, хупă сасă) паллаштарасси, вĕсемпе вĕренӳре усă курма хăнăхтарасси.

**Пуплев** (калупа çыру) çинчен пĕтĕмĕшле ăнлав парасси.

**Предложени тата сăмах.** Пуплеври (текстри) предложенисене, предложенири сăмахсене уйăрса илесси, вĕсене фишкăсемпе усă курса палăртасси. Предложени сăмахсенчен тăни. Предложенин пуçламăшĕ тата вĕçĕ. Чарăну паллисем (пăнчă, хӳреллĕ пăнчă, ыйту палли, кăшкăру палли), вĕсен ячĕсемпе паллаштарасси.

Сăмах сасăсенчен тăни, унăн пĕлтерĕшĕ пурри.

**Сыпăк, пусăм.** Сăмахсене сыпăкăн пайласси (сыпăкласси). Сăмахсенче сыпăксен шутне, йĕркине палăртасси. Пусăмлă тата пусăмсăр сыпăксене асăрхасси, сăмаха тĕрĕс пусăмласа (пусăм ӳкекен сыпăка тăсарах, вăйлăрах) каласси.

**Сасă.** Пĕтĕмĕшле ăнлантарасси. Сăмахри сасăсене уйăрасси, фишкăсемпе усă курса вĕсен хисепне, йĕркине палăртасси.

Каланă сасăллă сăмаха ыттисем хушшинче палласси, хатĕр схемăна тивĕçтерекен, пĕр-пĕр сасăран е сыпăкран пуçланакан сăмахсене аса илесси. Уçă тата хупă сасăсене илтесси, пĕр-пĕринчен уйăрса илесси.

**Çыру хăнăхăвĕсем.** Çырнă чух тĕрĕс ларма, тетраде кирлĕ пек хума, кăранташпа ручкăна меллĕн тытма, ӳкерчĕксем тунă е çырнă чух вĕсемпе тĕрĕс усă курма вĕрентесси.

Пирĕн çырăвăн хăй евĕрлĕхĕ: эпир ытти чылай халăх пек сулахайран сылтăмалла йĕркен-йĕркен çӳлтен аялалла çыратпăр.

Çырулăхра усă куракан хăш-пĕр капăшсен ячĕсемпе паллаштарасси: ***виç кĕтеслĕх, тӳр кĕтеслĕх, çаврашка, ункă, çур ункă, пĕкĕ, çекĕл, лапчăк ункă.***

Капăша пĕрлĕхлĕ курма тата унăн пайĕсене палăртма хăнăхтарасси. Пайсем тăрăх капăшне тавçăрасси, пайсенчен капăш пуçтарасси, капăшри çитмен пайсене ăнкарасси.

Капăшсене куç виçипе танлаштарасси, вĕсем хăш пайĕсемпе пĕр пеккине е пĕр-пĕринчен уйрăлса тăнине асăрхама хăнăхтарасси. Лап выртакан (горизонтальная), чăнкă анакан (вертикальная) йĕрсемпе паллаштарасси, вĕсене тетрадьре тупасси. Хăш-пĕр йĕрсен ячĕсемпе паллаштарасси: ***чалăш йĕр*** (косая линия), ***кукăр йĕр*** (кривая линия) т.ыт.те.

Тĕрлĕ йĕре, капăшсене, эрешсене, сас паллисен пайĕсене сывлăшра евĕрлесси, йĕрлесси. Çырса пĕтермен йĕрсемпе капăшсене вĕçлесси, сăрласси.

**Уçлăх енĕсем: *сылмăм, сулахай, ум, хыç, аял, çӳл, мал, кай, çум.*** Япаласен, капăшсен уçлăхри вырăнне курма, сăмахпа палăртма пĕлесси.

**Итлев тата калу хăнăхăвĕсем.** Аслисем, тантăшĕсем каланине, вуланине итлеме-илтме хăнăхтарасси: итлеме хатĕрленесси, малтан пуçласа вĕçне çитиччен пӳлмесĕр, каланине ăш пиллĕн йышăнса итлесси. Илтнине ăнланма, астуса юлма тăрăшасси.

**Çыхăнуллă каласа пама, текст калăплама вĕрентесси.** Текст теми, сюжечĕ - ĕç мĕнле пуçланать, мĕн хыççăн мĕн пулса иртет, мĕнле вĕçленет. Сăмах кам е мĕн çинчен пырать.

Итлеме, çыхăнуллă каласа пама вĕрентнĕ май ачасен сăмах йышне пуянлатасси, сăмахсен пĕлтерĕшне тĕрĕсрех, тарăнрах чухлама, вĕсен грамматика формисене тума, пуплевре вĕсемпе вырăнлă усă курма, тĕрлĕ тытăмлă предложенисене

## САС ПАЛЛИСЕМ ВĔРЕННĔ ТАПХĂР

### Вулама- çырма вĕрентесси

Тăван чĕлхери тĕп сасăсем, вĕсене уйăрасси, çырура палăртасси. Кĕнекере тата ал çырăвĕнче усă куракан сас паллисем, вĕсен пĕлтерĕшĕсем.

Вĕреннĕ сас паллисене тĕрĕс çырма, çырура пĕр-пĕринпе çыхăнтарма, тĕрлĕ йышши - усă, тӳнтер, тӳрĕ сыпăкра, сăмахра, предложенире вулама хăнăхтарасси.

Хытă усă тата хытă хупă сасăсем. Аа, Уу, Ăă, Нн, Лл, Мм, Тт, Пп, Шш, Рр, Ыы, Вв, Хх сас паллисем. Вĕсене çырасси, хытă сыпăкра, сăмахра вуласси. Тӳнтер тата тӳрĕ сыпăксене вулас вăрттăнлăх.

Çемçе усă тата хупă сасăсем. Ии, Ее [э], Ĕĕ, Сс, Кк, Ӳӳ, Çç, Чч сас паллисем, вĕсене çырасси. Позициллĕ вулав. Хытă, çемçе сыпăксем, сăмахсем. Хупă сасса палăртакан сас паллин пĕлтерĕшĕ вăл мĕнле сыпăкра тăнинчен килни. ХытăлăхĔçемçелĕх енчен мăшăрлă сыпăксене, сăмахсене танлаштарса вуласси, сас паллисенчен пухасси, пичетлесси.

Çемçелĕх палли (ь). Хутăш сыпăксем, сăмахсем. Çемçе хупă сасăсене палăртмалли мелсене сăнасси.

Тăван чĕлхери [й] сасă, ăна уйăрасси, палăртасси. Йй сас паллисем. Юю, Яя, Аă сас паллисем сыпăка та, пĕр сасса та пĕлтерни.

Вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсенче тĕл пулакан сасăсем, вĕсене уйăрасси, тĕрĕс каласси. Оо, Ăă, Бб, Гг, Дд, Зз, Жж, Фф, Цц, Щщ сас паллисем, уйăракан паллăсем (ь, ь)

Сăмахсене тăстарса, сыпăксене сыпăнтарса вулама вĕрентесси.

Сасă тишкерĕвĕ тунă сăмахсене хатĕр сас паллисемпе сыпăксенчен пухасси, класс хăми çине пичетлесси, вуласси, евĕрлесе çырасси.

Уйрăм сăмахсене, ансат предложенисене тата пысăках мар текстсене тĕрĕс, ăнланса, пĕр тикĕс (йывăр сăмахсене сыпăкăн пайласа), тĕрĕс пусăмласа вуласси, вуланине ăнланасси, ыйтусене хуравласси. Вулав хăвăртлăхĕ - минутра 12-15 сăмах.

Вуланă чухне предложенисем тата предложенири пĕр йышши членсем хушшинче чарăну тăвасси. Предложение, вĕçĕнчи чарăну паллине кура, тивĕçлĕ интонаципе вуласси.

Ал çырăвĕнчен, пичетленĕ текстран сăмахсем, предложенисем (малтан - вĕсене сасă тата сас палли тишкерĕвĕ тунă хыççăн, кайран - харпăр хăй тĕллĕн) çырса илесси. Çырнине кĕнеке е класс хăми çинчи текстпа танлаштарса, сыпăкăн-сыпăкăн вуласа тĕрĕслесси.

Ансат сăмахсене, 2 -3 сăмахран тăракан предложенисене каланă тăрăх çырасси.

Предложени пуçламăшĕнчи сăмаха, çын ячĕпе хушаматне пысăкран пуçласа çырасси. Предложени вĕçне чарăну палли лартасси.

Çыру гигиенин правилисене пĕлесси.

**Пуплеве аталантарасси**

Пуплевĕн сасă культури. Харпăр хăйĕн тата урăх çыннăн пуплевне тимлеме, итленине асăмлама хăнăхтарасси. Калаçу хăнăхăвĕсене лайăхлатасси: васкамасăр, ирĕккĕн (тытăнчăксăр, пӳлĕнсе тăмасăр), вăтам хăвăртлăхпа, сасă хăпартмасăр, уçăмлăн калаçма, калаçнă май тĕрĕс сывлăш çавăрма, интонацие кирлĕ пек улăштарма вĕрентесси.

Пуплеври сасăсене илтес, калас пултарулăха лайăхлатасси: тăван чĕлхери тĕп сасăсене уйăрма, вĕсене уйрăмшарăн тата пуплевре тĕрĕс каламалли (орфоэпи) виçесене пăхăнса калама хăнăхтарасси.

Пуплеври сасăсене тĕрĕс илтме, сăмахсене, вĕсен майлашăвĕсемпе предложенисене çăмăллăн ăнкарма, шухăша хăвăрт ăнланма хăнăхтарасси. Уйрăм ачасен пуплев кăлтăкĕсене юсасси.

Сăмах. Вĕренекенсем усă куракан сăмах йышне ӳстересси. Япаласемпе пулăмсен ячĕсене, вĕсен паллине, ĕçне пĕлтерекен сăмахсене литература чĕлхинчи пек калама вĕрентесси,

Япаласене вĕсен тĕп паллисем тăрăх ушкăнлама, пĕр-пĕринчен уйăрса илме, япала ушкăнне пĕр сăмахпа пĕтĕмлетме (ят пама) хăнăхтарасси.

Сăмах пĕлтерĕшне тĕплĕнрех ăнланасси. Сăмахсен пулăв çыхăнăвĕсене асăрхаса ăнкарасси.

Шухăша тĕрĕс уçса пама кирлĕ сăмаха хăвăрт тупма, ăна ытти сăмахсемпе тĕрĕс çыхăнтарма, сăмахсен грамматика формисемпе вырăнлă усă курма, пĕр шухăша тĕрлĕ майпа палăртма вĕрентесси.

Ансат тĕслĕхсемпе усă курса сăмах нумай пĕлтерĕшлĕ пулма пултарнипе, омонимсемпе тата синонимсемпе (терминĕсене асăнмасăр) паллаштарасси.

Вырăнти калаçупа литература чĕлхин уйрăмлăхĕсене уяма хистесси.

Сăмахсен грамматика формисемпе усă курасси. Литература чĕлхинче йышăннă грамматика формисене ăнланма, вĕсемпе тĕрĕс усă курма вĕрентесси. Çав шутра: япала ячĕсен, местоименисен падеж тата хисеп формисем, глаголăн ытларах тĕл пулакан (хальхи, пĕрре иртнĕ, пулас) вăхăт формисем, вĕсен хирĕçлев, пултараслăхĔ пултараймаслăх аспекчĕсем (терминсене асăнмасăр).

Сăмах майлашăвĕ. Япалан камăнлăхне палăртасси. Тăванлăх терминĕсен сăпат формисем. «Сăпат ылмашĕ е тулли пĕлтерĕшлĕ япала ячĕ Ă пулăшу пĕлтерĕшлĕ япала ячĕ» калăплă сăмах майлашăвĕсен тăтăшлă ӳкĕм формисемпе *(манăн патăмра, санăн патăнта* т.ыт.те) пуплевре усă курасси.

Предложени. Тытăмĕпе (хутсăр, хутлă) тата калас тĕллевне кура (калуллă, ыйтуллă, хистевлĕ) тĕрлĕ предложени калăпласси. Пуçланă предаоженисене вĕçлеме, ансăррисене анлăлатма пĕлесси. Пĕр шухăшах тĕрлĕ предложенипе е вĕсен çыххипе палăртасси. Предложенири сăмахсен йĕркине сăнама, вĕсене тĕрĕс çыхăнтарма хăнăхтарасси.

Çыхăнуллă пуплев. Пуплев хăнăхăвесене малалла аталантарасси: тимлесе итлеме, асăмлама, çыхăнуллă каласа пама, вĕрентекен ыйтăвĕсене тĕрĕс, уçăмлăн хуравлама, пугшевре предложенин тĕрлĕ тĕсĕпе усă курма хăнăхтарасси. Итленĕ е вуланă калавсем, юмахсем тăрăх хăйсен шухăшне каласа пама вĕрентесси.

Тăван литература чĕлхине ăнланма, унăн фонетика системипе, сăмах пуянлăхĕпе, морфологи тата синтаксис мелĕсемпе пуплевре тĕрĕс усă курма, курни-илтни çинчен çыхăнуллă каласа пама вĕрентесси. Юлташĕсен хуравĕсене, каласа панине ырă кăмăлпа итлеме-тимлеме хăнăхтарасси.

Калавсемпе юмахсем, диалогсем, сăвăсем итлесси-тăнласси, асăмласси (учитель вуласа е каласа панине, магнитофон ленти çине çырса илнине, ача-пăча валли хатĕрленĕ теле- тата радиокăларăмсене).

Пысăках мар юмахсемпе калавсене аса илесси, вĕсене уйрăм пайсене пăтраштармасăр, сиктерсе хăвармасăр каласа парасси (хăйсем тĕллĕн е вĕрентӳçĕн ыйтăвĕсем тăрăх).

Вуланă предложенисем, текстсем тăрăх ыйтсан хуравлама, текста, унăн уйрăм пайĕсене ят пама пĕлесси.

Уйрăм темăпа çыхăннă темиçе ӳкерчĕк тăрăх предложенисем, çыхăнуллă пĕчĕк калавсем тăвасси.

Пуçланă калава вĕçлесси, вĕçне илтнипе калавăн пуçламăшне шутласа тупасси. Пулни-иртни çинчен вуланипе пĕр евĕрлĕрех каласа парасси.

Çут çанталăкри улшăнусем çинчен, экскурсире, библиотекăра, ытти обществăлла вырăнта курни-илтни çинчен çыхăнуллă калама хăнăхтарасси.

**САС ПАЛЛИСЕМ ВĔРЕННĔ ХЫÇÇĂНХИ ТАПХĂР**

*(2 0 сехет)*

Ачасем урокра мĕн вуламаллине палăртасси вĕрентӳпе аталантару, сапăрлăх тĕллевĕсене пурнăçлассипе, вĕсен тĕнче курăмне, тĕнче йышăнăвне йĕркелессипе çыхăннă.

**Вулав карти:** вăхăт, кунпа çĕр улшăнăвĕ, çулталăк вăхăчĕсем, Тăван çĕр-шыв, тăван республика, тăван ял, Тăван çĕр-шывăн чыслă сумлă çыннисем, ача тата унăн тусĕсем, çут çанталăк, çут çанталăкри пулăмсем, чăваш халăх сăмăхлăхĕ, тĕрлĕ халăх юмахĕсем, И.Я.Яковлев, К.В.Иванов, Н.И.Шелепи хайлавĕсем.

**Пăхмасăр калама вĕрентесси:** вĕреннĕ 4-5 сăвва пăхмасăр каласси.

Вулав хăнăхăвĕсем. Вĕрентӳçĕ тата ытти ачасем каланине (вуланине) тимлĕн итлес-тăнлас, ăнланса асăмлас хăнăхусене лайăхлатасси. Пысăк мар текста тĕрĕс, ăнланса, пĕр тикĕс, сыпăкăн тăсса воласси. Вулав хăвăртлăхĕ (палламан текста вуласси) - пĕр минутра 15-20 сăмах. Предложени вĕçĕнче, пĕр йышши членсем хушшинче чарăну тăвасси.

Диалоглă текстсене сасса кирлĕ пек улăштарса вуласси. Вулавăн тĕрлĕ тĕсĕсене (саспа, çурма саспа, шăппăн, пăшăлтатса) вĕренсе пырасси.

Текстпа ĕçлесси. Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси. Вуланă текст тăрăх ыйтусене хуравласси; вуланă текстăн шалăшне (содержанине) ӳкерчĕксем тăрăх аса илесси; ятсăр текста ят парасси, текстăн ячĕ мĕншĕн çаплине ăнкарасси (вĕрентӳçĕ пулăшнипе). Вуланине пĕтĕмĕшле хак парасси. Ӳкерчĕксем тăрăх çыхăнуллă калав йĕркелесси (çырмасăр).

## Çырасси тата пуплеве аталантарасси

Маларах вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетесси. Сăмаха сыпăкласси, пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарасси.

Çырас ăсталăха лайăхлатасси. Сас паллисен ĕлкине тĕрĕс тăвас, вĕсене пĕр-пĕринпе çыхăнтарас хăнăхăва çирĕплетесси. Сас паллисене, сыпăксене, сăмахсене тата кĕске предложенисене пĕр хăвăртлăхпа (харăс, шутласа) çырасси. Çыру гигиенине çирĕп уяма хăнăхтарасси.

Сăмах мĕнле сасăсенчен тăнине, вĕсене çырура хăш сас паллисемпе палăртмаллине чухлама, сиктерсе хăварнă сас паллисене тавçăрма, пăтраштарнă сыпăксенчен сăмахсем, сăмахсенчен предложенисем йĕркелесе çырма вĕрентесси.

Пысăках мар текста кĕнеке е класс хăми çинчен пăхса çырма, çырнине тĕрĕслеме хăнăхтарасси.

Предложенисене, пысăках мар (2 -3 кĕске преддоженирен тăракан) текста итлесе е вуласа çырасси.

### Итлевпе калу хăнăхăвĕсене малалла аталантарасси

Пĕр-пĕр темăпа (тĕслĕхрен, ашшĕ-амăшĕ, шкул, ачасен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен), ӳкерчĕке сăнаса, ӳкерчĕксен серийĕсем тăрăх, пурнăçра курни-илтнине аса илсе вĕрентекен ыйтăвĕсемпе кăтартăвĕсем çине тĕревленсе пысăках мар калавсем тутарасси.

Вуланине е итленине аса илсе, вĕрентекен пулăшса пынипе ыйтусене хуравласси, çыхăнуллăн каласа парасси.

## 2-МĔШ КЛАСС

1-мĕш класра мĕн вĕрентнине шута илсе, вулав урокĕсемпе тачă çыхăнтарса ачасен çыхăнуллă калаçас, тăнласа ăнкарас, вулас тата çырас мехелĕсене малалла аталантармалла. Вуламалли, тăнламалли, çыхăнуллă каласа памалли, калаçăва хутшăнмалли, çырмалли хăнăхтарусем çине таянса вĕсемпе çыхăнуллăн чĕлхе тытăмĕн тĕрлĕ сийĕпе (фонетика, лексика, морфологи, синтаксис, стилистика) усă курма пĕлнине лайăхлатмалли хăнăхтарусем куллен йĕркелемелле. Вулаттарнă, пуплеве тăнлаттарнă, çыхăнуллă пуплев тутарнă, çыртарнă май вĕренекенсене чĕлхен тĕрлĕ енĕсене (аспекчĕсене) ансат тишкерме, чĕлхе ăслăлăхĕн кирлĕрех терминĕсемпе, янтă пĕлĕвĕсемпе усă курма вĕрентмелле.

**Çыхăнуллă пуплев.** Пуплевĕн пурнăçри пĕлтерĕшĕ.

**Текст.** Ăна темăпа çыхăнман предложенисен пуххипе танлаштарасси. Текст ячĕ. Текстра мĕн çинчен каланине (текст темине) палăртасси. Текст тытăмĕ, пуçламăшĕ, тĕп пайĕ, вĕçĕ. Абзац. Текста темиçе сыпăка (пая) уйăрасси. Текст пайĕсене ят парасси. Текст планĕ. Текст тĕсĕсем, калав, сăнлав, уйлав.

**Ӳкерчĕксемпе ĕçлесси.** Ӳкерчĕксем тăрăх ыйтусене хуравласси, предложенисем тăвасси. Вĕсене çырасси.

**Изложени çинчен ăнлантарасси.** Ыйтусене ушкăнпа хуравланă, йывăр орфограммăсене асăрхаттарнă хыççăн вĕрентӳçĕ пулăшнипе 30-45 сăмахлă текст тăрăх изложени çырасси.

Ачасен пурнăçĕпе çыхăннă темăсемпе (вăйă выляни, вăрмана экскурсие кайни, кама та пулин пулăшни, шкул çинчен) 4-5 предложенирен тăракан пĕчĕк калав тăвасси.

**Пуплев этикечĕ.** Сывлăх сунни. Сывлăх суннă чух усă куракан тараватлăх сăмахĕсемпе сăмах майлашăвĕсем. Паллашу сăмахĕсемпе предложенисем. Сăпайлăн тав тума пĕлесси. Сыв пуллашу сăмахĕсем.

**Ĕç хучĕсем.** Ансат пĕлтерӳ хайласси. Юлташ патне çыру çырасси.

### Сăмах йышне пуянлатасси, унпа усă курма пĕлнине çирĕплетесси

**Тăван-хурăнташа чĕнесси:** атте, анне, асанне, асатте, кукаçи, кукамай, пичче, аппа, шăллăм, йăмăк, кукка, мăн акка, инке, мучи, кинемей.

**Тумтир тата атă-пушмакпа çыхăннă сăмахсем:** пушмак, атă, çăм атă, алса, алсиш, калуш, çуха, кунча, кĕсье, карттус, майка, нуски, пиншак, тутăр, кĕпе, çанă, саппун, чăлха, çĕлĕк;

вăрăм, кĕске, илемлĕ, капăр, хитре, шукăль, ăшă, çăм, пурçăн, сарлака;

хыв, хывса ил, салт, тӳмеле, çĕтĕл, пĕт, кивел, тумлан, тăхăн.

**Кил-çурт таврашĕпе çыхăннă сăмахсем:** мунча, хапха, алăк, картиш, карта, çурт, пӳрт, кĕлет, пусă, çăл, вите, лаç, сарай, çенĕк, пӳрт ум, вутă, кухня, газ, плита, ванна, душ, туалет, кран, сивкĕч (холодильник), шăнткăч (морозильник), пӳлĕм, пусма, картлашка, чӳрече, кăмака, форточка, сакай, урай, мачча, хăлăп, стена, мăрье, юпа, чăлан;

çӳллĕ, ăшă, хулăн, çӳхе, таса, сарлака;

хуп, хупăн, çурăл, шăл, тасат, çу, ту.

**Кил-çуртри япала ячĕсем:** пичке, витре, чӳлмек, кашăк, вилка, çăра, çăраççи, чаршав, тĕкĕр, йĕп, карта, хуран, турчка, кравать, кашăк, тӳшек, сĕтел, пукан, шăпăр, михĕ, хутаç, çĕçĕ, утиял, кушăх, минтер, çытар, çитĕ (çитти), çăпала, сак, çатма, шăрпăк, кантăк, хыçлă пукан, турилкке, чашăк, шкап, щçтка, стакан.

**Килти кайăк-кĕшĕк ячĕсем,** вĕсемпе çыхăннă ытти пуплев пайне кĕрекен сăмахсем: хур, кăркка, автан, чăх, кăвакал, кайăк-кĕшĕк, хур-кăвакал;

ырхан, хыткан, начар, мăнтăр, самăр;

чиклет, авăт, какала, нартлат.

**Килти выльăх-чĕрлĕх ячĕсем,** вĕсемпе çыхăннă ытти пуплев пайне кĕрекен сăмахсем: така, вăкăр, тиха, ăйăр, кĕсре, качака, ут, лаша, ĕне, кушак, кролик, сурăх, сысна, йытă, пăру, анчăк, путек, аçа, ама, выльăх, çăвăр; сĕкекен, çара, мăкла, çăмламас, ăратлă, мăйракаллă, пĕтĕ, хĕсĕр;

кӳл (лаша), мĕкĕр, вĕр, сыхла, чăрмала.

**Кайăк-кĕшĕк ячĕсем:** акăш, ăсан, вĕçен кайăк, кайăк хур, хур кайăк, кăвакарчăн, кăсăя, куккук, курак, пăрчăкан, путене, çăхан, çерçи, тăмана, тăри, тăрна, уйăп, ула такка, хурчка, чакак, чана, чĕкеç, чĕпĕ, шăнкăрч, шăпчăк.

**Пулăсемпе шыври чĕр чунсен ячĕсем,** вĕсемпе çыхăнакан ытти пуплев пайĕсем: йыт пулли, карас, карп, партас, çăрттан, çĕлен пулă, çырма пулли, çтерлĕк, шапа, шапа вăлчи, ыраш пăтри, пулăçă, вăлта, вăлча, карас кӳлли, пĕве пулли, тăварлă пулă, кулă шӳрпи, вĕтĕ пулă.

**Апат-çимĕç ячĕсем,** вĕсемпе çыхăнакан ытти пуплев пайсем: апат, аш, икерчĕ, йăва, какай, канфет, кĕрпе, кĕсел, компот, кукăль, лапша, макарон, манна, мăйăр, мороженăй, пăтă, печени, пĕремĕк, пыл, сахăр, серте, пултăран, сĕт, чăкăт, çăкăр, çăмарта, çăнăх, çу, тăвар, тăпăрчă, турăх, уйран, улма, хăйма, чей, чуста, шаркку, шушкă, яшка;

вир (тулă, хура тул, сĕлĕ) кĕрпи?, килти çăкăр, хура çăкăр, шур çăкăр, çавра çăкăр, çăкăр чĕлли, сăмси, çăкăр магазинĕ, купăста (сĕт) яшки, мăйăр тĕшши, пан улми, калакла (чăмăрла) çăмарта, çăмарта хăпартни, аш (тăпăрчă) кукли, хуран кукли, çăка (чечек) пылĕ, аш апачĕ, çатма икерчи, тăпăрчă (çĕр улми) икерчи, лапша яшки, какай шӳрпи, кĕрпе яшки, сĕлĕ кĕселĕ, çырла кĕселĕ, шĕвĕ пăтă, улма нимĕрĕ, кĕрпеклĕ (типĕ) печени, катăклă сахăр, сахăр песокĕ, тулă (ыраш, сĕлĕ) çăнăхĕ;

ирхи апат, кăнтăрлахи апат, каçхи апат;

уйран уçла, компот вĕрет, варени пĕçер, пыл юхтар, йӳçĕ калать;

йӳçĕ, çуллă, çусăр, пылак, тăварлă, тăварсăр, тутлă, йӳçек, пыллă, сахăрлă;

çыртăк, касăк, татăк, чĕлĕ;

апатлан, апатлану.

**Улма-çырла, пахча çимĕç ячĕсем,** вĕсемпе çыхăнакан ытти пуплев пайĕсем: купăста, сухан, çĕр улми, кишĕр, хăяр, помидор, йӳç кăшман, сахăр кăшманĕ, выльăх кăшманĕ, çарăк, кавăн, ыхра, фасоль;

тутлă, йӳçĕ, хĕрхӳ, пылак, шултра, пысăк, вак, вĕтĕ, çӳллĕ, лутра, чĕрĕ, сĕтеклĕ;

шăвар, çумла, çитĕн, пиç, кас, ларт, ак, пух, пуçтар, пулса çит, тăварла, тат, çитĕнтер;

мăкăнь, нимĕç пăрçи, çĕр çырли, хурăн çырли, улмуççи, хăмла, хăмла çырли, хăвел çаврăнăш, хура çырла, хурлăхан, чие, хĕрлĕ хурлăхан, хура хурлăхан;

кăшман çеçки, йăран, кишĕр сĕткенĕ, купăста калчи, купăста пуçĕ, помидор калчи, помидор сĕткенĕ, çĕр улми аври, çĕр улми купала, ыхра шăлĕ, хăмла пахчи, хăмлаçă, хăяр калчи, хĕвел çаврăнăш пуçĕ (çăвĕ).

**Йывăç ячĕсем,** вĕсемпе çыхăнакан ытти сăмахсем: ăвăс, йăмра, йĕлме, каврăç, палан, пилеш, çăка, çĕмĕрт, çирĕк, çӳçе, тирек, хăва, хурăн, хыр, чăрăш, шăлан, шĕшкĕ, юман;

ăвăслăх, йăмралăх, йĕлме йĕлтĕр, палан çырли, паланлăх, хура пилеш, пилеш çупкăмĕ, çăка пылĕ, çăка чечекĕ, çăкалăх, çĕмĕрт çеçки, çирĕклĕх, çӳçелĕх, тирек мамăкĕ, тиреклĕх, хăва хулли, хурамалăх, хурăн милĕкĕ, хурăн шывĕ, хырлăх, чăрăшлăх, шăлан çырли, шĕшкĕ мăйăрĕ, шĕшкĕлĕх, юманлăх, юман йĕкелĕ.

**Тĕрлĕ ӳсен-тăран ячĕсем,** вĕсемпе çыхăнакан ытти сăмахсем: тулă, ыраш, урпа, сĕлĕ, пăрçа. пăри, кукуруза, вир, вĕлтĕрен, пултран, мăян, хупах, хăях, пиçен, армути, куршанак, кăшкар ути, утмăл турат, йыт пырши, чăрăш тăрри;

йĕкел, хыр (юман) йĕкелĕ, кăчкă, хурăн кăчки, кăчкăллă, папак, чечек папакĕ, папкалан, пучах, сапака, хурлăхан сапаки, сĕткен, хурăн сĕткенĕ, çеçке, роза (сирень) çеçки, çеçкене лар, çеçкелен, çулçă, çулçăллă, çырла, çырла шывĕ, çырла пиçнĕ, турат, хунав турат, туратлă, тымар, йывăç тымарĕ, хулă, хăва хулли, хунав, чие хунавĕ, хунав вăрман, хунав яр, хурлăхан хунавĕ, чечек, чечек йăранĕ, чечек çыххи, чечеке лар.

**Кăмпа ячĕсем,** вĕсемпе çыхăнакан ытти сăмахсем: кăмпа, ăвăс кăмпи, масла кăмпи, çерем кăмпи, тислĕк кăмпи, уплюнкка, ут тути, хурăн кăмпи, шăна кăмпи, юман кăмпи, шурă кăмпа, майра кăмпи;

çимелли кăмпа, наркăмăшлă кăмпа, кăмпаçă, кăмпана çӳре, кăмпа тат, кăмпа яшки.

### Чĕлхене ансат тишкересси, терминсемпе усă курасси

**Алфавит.** Сас паллисен ячĕсем тата йĕрки. Уçă тата хупă сасăсем. Хытă тата çемçе сасăсем.

Пĕр-пĕр сас паллипе пуçланакан сăмахсене словарьте шыраса тупма вĕрентесси. Сăмахсене алфавит йĕркипе вырнаçтарма хăнăхтарасси (пуçламăш сас палли тăрăх).

**Япалана пĕлтерекен сăмахсем.** Вĕсене *кам? Тата мĕн?* ыйтусем тăрăх тупасси.

**Япала ĕçне пĕлтерекен сăмахсем.** Вĕсене *мĕн тăватӳ? мĕн тăвĕ? мĕн турĕ?* ыйтусем тăрăх тупасси.

**Япалан тата унăн ĕçĕн паллине пĕлтерекен сăмахсем,** вĕсене *мĕнле?* ыйту тăрăх тупасси.

**Сăмахсене вĕсен пĕлтерĕшĕсене кура ушкăнласси.** Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсем: *хура — шурă, пысăк — пĕчĕк, сарлака—ансăр, пылак — йӳçĕ.* Çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсем: *васка — хыпалан, кил — пыр, усал — хаяр, аван—лайăх, илемлĕ — хитре, чипер.*

**Лексикăпа тематика ушкăнĕсем:** а) тĕс ячĕсем *(хĕрлĕ, сарă, шурă, хура, хăмăр, кăвак* т.ыт.те; *çӳрен, турă, хăла, ула, сарă-хăла* - лаша çинчен); ă) çынна хаклакан сăмахсем *(чипер, шемлĕ, тирпейлĕ, тăрăшуллă, ĕçчен, кахал, наян, мăнтăр, начар* т.ыт.те,).

Предложени. Пуплеври предложенисене уйăрасси (маларах вĕреннине çирĕплетесси). Предложенин тĕп (подлежащипе сказуемăй) тата кĕçĕн членĕсем (ячĕсене асăнмасăр).

Тĕрлĕ калăплă (тытăмлă) предложенисем йĕркелеме хăнăхтарасси. Вĕсене *(кам?мĕн? камăн?мĕнĕн? кама?мĕне? камра?мĕнре? камран? мĕнрен? кампа? мĕнпе? камсăр? мĕнсĕр? камшăн? мĕншĕн?)* ыйтури сăмахсемпе анлăлатасси.

**Пунктуаци.** Предложени вĕçне пăнчă, ыйту тата кăшкăру паллисем лартасси.

**Орфографи.** 1) Хытă уçă сасăллă сыпăк е сăмах вĕçĕнчи [л'], [н'], [т'] сасăсене л, н, т сас паллисем хыççăн çемçелĕх палли (ь) çырса палăртасси: *выльăх, кукăлӳ, супăнӳ, мăкăнӳ, халӳ, ахалӳ, мăкăль, шукăль; ларатӳ, вылять, чупать, тăрăшатӳ.*

2) Уйăракан çемçелĕх палли (ь) çырасси: *мăрье, кĕсье, тухья,*

*Марье.*

3) Вăрăм хупă сасса икĕ пĕр пек сас паллипе палăртасси:

ăру-тăванлăх сăмахĕсенче: *атте, анне, асатте, шăллăм, аппа,кукка, мăн акка;*

çулталăк вăхăчĕсен ячĕсенче: *çулла, хĕлле, кĕркунне, çуркунне;*

хальхи вăхăтри нумайлă хисепри 3-мĕш сăпатри глаголсен формисенче: *вулаççĕ, вуламаççĕ, ĕçлеççĕ, ĕçлемеççĕ, выляççĕ, вылямаççĕ.*

4) Сăмаха пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарасси: *ма-ши-на,вы-ля, япа-ла, пĕ-лĕт-сем.*

5) Çын ячĕпе хушаматне тата ашшĕ ятне, выльăхсемпе чĕр чунсен уйрăм ячĕсене, хула, ял, урам, юхан шыв ячĕсене пысăк сас паллирен пуçласа çырасси: *Иванова Мария Василўевна, Михайлов Иван Викторович, Мăрмăр, Кампур, Улайкка, Анўяр, Хураçка, Канаш, Шупашкар, Шурча, Çавал, Кĕçĕн Çавал, Атăл, Сĕве.*

6) Вырăс чĕлхинчен йышăннă хăш-пĕр сăмахсене вырăс чĕлхинчи пекех çырасси: *Миша, Наташа, Коля, Петя, Таня;*
*машина, трактор, комбайн, завод, фабрика, самолçт, ракета;*
*парта, учителў, директор; колхоз, ферма, сад, дыня, помидор;*
*кухня, стакан, щçтка.*

**Таса та илемлĕ çырасси**

Çыру гигиени хăнăхăвĕсене (тĕрĕс ларма, тетраде хума, ручкăна тытма т.ыт.те пĕлнине) çирĕплетесси.

Пĕчĕк сас паллисене йывăрлăх енчен ушкăнласа (5 ушкăн) çырасси: 1) и, ш, г, п, т, й, н, р, у, ў; 2 ) л, м, ц, щ, ь, ы; 3) а, ă, ю, ф, д, б, я; 4) с, ç, е, ĕ, ă, ч, ь, в; 5) э, х, ж, к.

Пысăк сас паллисене йывăрлăх енчен ушкăнласа (4 ушкăн) çырасси: 1) Й, И, Ш, Ц, Щ, Ч, Ы, Л, М, А, Ă; 2 ) О, С, Ç, Х, Е, Ĕ, Ç, З, Э, Я; 3) Ж, У, Ў, Н, К, Ю, Р, В, Ф; 4) Г, П, Т, Б, Д.

Таса та илемлĕ, тĕрĕс çырмалли сăмахсем: *алсиш, анне, аппа, асатте, атте, ăмăрт кайăк, библиотека, больница, выльăх, вырсарни кун, герой, дежурнăй, ешчĕк, çлка, журнал, йăмăк, кĕçнерни кун, кĕркунне, кĕсье, класс, класра, колхоз, коньки, комбайн, комбайнер, кукамай, кукаçи, кукка, лçтчик, майка, мунча, пан улми, пичче, ракета, самолçт, çулла, çуркунне, тăвайкки, тетрадь, трактор, тунти кун, тыр-пул, улмуççи, учитель, учительница, ўхĕ, физкультура, хĕлле, чăх-чĕп, шăллăм, шăмат кун, щçтка, ытлари кун, эрне кун, юлан ут, юн кун, ялав.*

## 3-МĔШ КЛАСС

Маларах вĕреннине аса илсе çирĕплетесси. Ачасен вулавпа çыру хăнăхăвĕсене, çыхăнуллă калаçас, пуплеве тăнласа ăнланас мехелĕсене малалла аталантарасси. Пуплевĕн тĕп ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăнуллăн тата вĕсем çине таянса тăван литература чĕлхин пур сийĕсемпе те усă курма пĕлнине лайăхлатасси, чĕлхене тишкерме, лингвистикăн ансат пĕлĕвĕсемпе усă курма вĕрентесси.

**Çыхăнуллă пуплев.** Текст. Текста вуласа унăн тĕп шухăшне палăртасси. Текст ячĕ темипе, тĕп шухăшĕпе шайлашса тăни. Текст пайĕсене уйăрасси, вĕсене ят парасси. Вĕрентӳçĕ ертсе пынипе калуллă тата сăнлавлă текст планне тăвасси. План тĕсĕсем: ыйтуллă тата калуллă.

Хатĕр е ушкăнпа тунă планпа усă курса текст тăрăх изложени çырасси.

Илемлĕ текстăн ансат жанрĕсем: калав, юмах, сăвă. Вĕсен тытăмĕн уйрăмлăхĕсем. Текст пайĕсен шалашĕ пĕр-пĕринпе килĕшсе тăни.

Темиçе е пĕр ӳкерчĕк тăрăх тата пурнăçра курни-илтни (вăййасем, ачасен ĕçĕ-хĕлĕ, çут çанталăка сăнани, тĕрлĕ çĕре экскурсие кайни, ялти ватăсене пулăшни) çинчен çыхăнуллă калав йĕркелесси, ун хыççăн сочинени çырасси. Харпăр хăй ĕçĕ çинчен кама та пулин (юлташа, асатте-асаннене) çыру çырса пĕлтересси.

**Пуплев этикечĕ.** Сăмах вĕççĕн е çыру çырса хăнана чĕнесси, саламласси. Сăпайлăх сăмахĕсемпе усă курасси. Телефонпа калаçасси.

Çулĕпе аслăрах çынна чăвашла сумласа чĕнмелли сăмахсем (пичче, аппа, инке, мучи, кинемей).

**Ĕç хучĕсем.** Класри е шкулти хаçата заметкăсем çырасси. Библиотекăран илсе вуланă кĕнекесен списокне туса пыма пĕлесси.

**Сăмах йышне анлăлатасси**

**Ăру-тăванлăх терминĕсем.** Тăванлăха атте, анне енчен кăтартакан таблицăсем.

**Тумтир, атă-пушмак ячĕсем:** кĕпе-йĕм, атă-пушмак, шăлавар, костюм, кофта, куртка, тумтир, перчетке, кĕрĕк, пиçиххи, сандалет, сараппан, тапочка, тăлăп, туфли, шарф, шлепке, юбка, кроссовка, атă, çăм атă, кăçатă, калуш;

япаласен, пулăмсен паллисене пĕлтерекен сăмахсем: кĕрхи, çурхи, хĕллехи, çуллахи, майлă, юрăхлă, тăвăр, аслă, пысăк, меллĕ, ансăр, анлă;

ĕçе пĕлтерекен сăмахсем: салтăн, ура салт, хыв, хывăн, çĕле, тăхăн.

**Кил-çуртри япаласен ячĕсем:** варинкке, куç кĕски, кастрюль, сăпка, валашка, кăкшăм, тенкел, простынь, сăмавар, умывальник, ухват, питлĕх, утюг, хунар, чейник, арча, чăматан, этажерка, сивкĕч (холодильник).

**Кил-çурт таврашĕпе çыхăннă сăмахсем:** ампар, хӳме, хуралтă, крыльца, шаршан, алăк янахĕ, чӳрече хашакки (янахĕ), путвал, пура, карçинкка.

**Апат-çимĕç ячĕсем,** вĕсемпе çыхăнакан тĕрлĕ пуплев пайĕсем: арпус, варени, иçĕм, квас, кефир, консерва, котлет, мармелад, пирожнăй, повидло, пӳремеч, рис, салат, сосиска, сухари, тултармăш, халва, хуплу, шăрттан, шӳрпе, шоколад, пельмень, çу;

выльăх (ӳсен-тăран) çăвĕ, сарă çу, услам çу, какай шӳрпи, аш (çĕр улми, пулă, кишĕр) котлечĕ, котлет фаршĕ, пан улми мармелачĕ, аш пельменĕ, пельмень чусти, бисквит пирожнăй, çĕр улми пӳремечĕ, аш (симĕс сухан) салачĕ, кăвакал хуплăвĕ, чие (хурлăхан, хурăн) çырли варенийĕ, иçĕм сĕткенĕ, çăкăр кăвасĕ, çырла квасĕ, (пулă, аш) консерви, ăшаланă çăмарта, йӳçĕтнĕ улма, типĕ иçĕм, какай шӳрпи;

апат-çимĕç таварĕсем, консерва банки, пĕр порци, салат савăчĕ, çимĕç шкапĕ, çăкăр тути;

варени пĕçер, кăмпа (аш, çĕр улми) ăшала, хăяр (купăста) йӳçĕт, сивĕт, вĕрет, йӳçĕх, тăварла, çу шăрат, йӳçенкĕ, хăймаллă.

**Йывăç ячĕсем,** вĕсемпе çыхăнакан ытти пуплев пайĕсем: акаци, бамбук, катăркас, кашкăр çырли, кăпчанкă, кедр, лиственница, пальма, уртăш, шурă чăрăш;

бамбук туя, лăсăллă йывăç, катăркас çырли, кедр мăйăрĕ, пальма çулçи, уртăш çырли.

**Ӳсен-тăран ячĕсем,** вĕсемпе çыхăнакан ытти пуплев пайĕсем: йӳçĕ курăк, кăвак çеçпĕл, пăлан мăкĕ, хаяр çырли, куккук йĕтĕнĕ, кашкăр çырли, йӳçек курăк, тимофеевка, чĕрĕп ути, сӳсен, хĕрлĕ клевер, чăрăш тăрри, йӳçĕ чĕп куç, упа кĕпçи, хир сĕлли, шур ут, кĕтӳç хутаçĕ, утмал турат, йыт пырши, кăшман курăкĕ, хăмăш, ӳхлĕм, пĕтнĕк, кукша пуç, шапа хупаххи, упа сарри, майра кĕпçи, шур чечек, çерçи кĕпçи, кăшкар ути, анра çарăк;

авăр, çĕр улми аври, хăмла аври, вăрă, йывăç вулли, кĕпçе, кучан, лăсă, чăрăш лăсси, сухăр, хыр сухăрĕ, тĕшĕ, мăйăр тĕшши, кукуруза тĕшши, ӳсен-тăран, хуйăр, юман хуйăрĕ, хуп, çăка хуппи (хупĕ), юман хуппи, хурăн хуппи, шерепе, сĕлĕ шерепи, хăмла шерепи, шерепеллĕ, сухăрлă, тĕшĕллĕ, сăсăл, тула (ыраш) сăсăлĕ.

**Улма-çырла, пахча çимĕç ячĕсем,** вĕсемпе çыхăнакан ытти пуплев пайĕсем: анис, антоновка, йĕплĕ çырла, слива, кăвак çырла, кĕтмел, китайка, кӳкен, петрушка, пĕрлĕхен, сырлан, укроп, шур çырли, турнепс, редис;

анис улма, китайка улми, петрушка тымарĕ, слива варенийĕ, сырлан тĕмĕ, сырлан çăвĕ, укроп вăрри, улмуççи сып.

**Кăмпа ячĕсем:** ăвă кăмпи, кăрăç, кăтра кăмпа, хурăн кăрăçĕ, хыр кăрăçĕ, хура кăрăç, шурă кăрăç, сăвăр кăмпи, мăк кăмпи, сарă кăмпа, симĕс кăмпа, çĕр кăмпи, така кăмпи, кăмпа туни, кăмпа шлепки.

**Тискер кайăк ячĕсем:** вĕсемпе çыхăнакан ытти пуплев пайĕсем: арăслан, арлан, ăтăр, йĕке хӳре, калта, кашкăр, кăш, мулкач, пакша, пăлан, пăрăнтăк, пăсара, пăши, сăсар, çĕлен, çĕлен-калта, çĕр мулкачи, çӳлевĕç, тигр, тилĕ, тимĕр шапа, упа, упăте, хир сысни, хурăн пуçлă çĕлен, тыр кас, чĕрĕп, хир шăшийĕ, шăши, кашкăр çури, шурă мулкач, пăлан пăрушĕ, пăши ĕни (пăрушĕ), шурă упа, упа çури;

арлан шăтăкĕ, калта хӳри, пăлан мăйраки, пăши ашĕ, упа шăтăкĕ.

**Кайăк-кĕшĕк ячĕсем:** карăк, сар кайăк, чепчен, кукăр сăмса, шурлăх тăмани, карăш, кайăк кăвакал, кăйкăр, вĕлтрен тăрри, хĕрен,çара çерçи, ăмăрт кайăк, пилеш кайăкĕ, ула такка, вĕршĕн, ӳхĕ, чарлан, чайка, текерлĕк, шăкăлчи, пингвин, павлин, страус, пăчăр;

çăткăн, сарă, хĕрлĕ, кăвак;

çавăр (йăва), ӳхлет, кăраклат, куккукла, сăх, тыт, юрла, танкка, чĕвĕлтет;

карăш картлатать, путене авăтать, чакак чаклатать;

карăк туйĕ, кăсăя сырăшĕ, çерçи йăви.

**Хурт-кăпшанкă ячĕсем:** пыл хурчĕ, сăрă, тĕкĕл тура, шыв нăрри, шыв хăнкăли, çĕлен лаши.

**Пулăсемпе шыври чĕр чунсен ячĕсем,** вĕсемпе çыхăнакан ытти пуплев пайĕсем: акула, ăптă, кăртăш, осетр, рак, сарă карас, çуйăн, тритон, уланкă, хура карас, шапа, шапа чĕппи, шăла, шерĕх, шыв çи, пулă чĕппи;

тинĕс пулли, вĕтĕ çупах, шапа хуранĕ, рак хаччи, сазан хуппи, чĕрĕ пулă;

вăлча сап, карп ĕрчет.

## Чĕлхене ансат тишкересси. Чĕлхе пĕлĕвĕн терминĕсемпе паллаштарасси. Сăмах тытăмĕ.

**Тымар тата аффикссем.** Сăмах тăвакан тата сăмаха улăштаракан аффикссем. Япалана пĕлтерекен сăмахсем çумне *-çă(-çĕ), -лăх(-лĕх), -у(-ӳ)* аффикссем хушăнса пулнă сăмахсене сăнасси. Пĕр тымартан пулнă сăмахсене асăрхаса ушкăнласси, аса илсе каласси, çырасси *(çыр — çыру — çырулăх, кала — калав — калавçă).*

**Япала ячĕ.** Унăн пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем. Пайăр ятсемпе пайăр мар ятсем. Япала ячĕсем пĕрреллĕ тата нумайлă хисепсенче пулни. Вĕсем ытти сăмахсемпе çыхăннă чухне тĕрлĕ аффикс йышăнни, ӳкĕм (падеж) термина асăнмасăр вĕсен ыйтăвĕсемпе аффиксĕсене пăхса тухни.

Камăнлăх аффиксĕсем йышăннă япала ячĕсем тĕп мар падежри пĕрреллĕ хисепри (терминсене асăнмасăр) формисемпе пуплевре усă курасси *(аттеме, аттемпе, аçуна, ашшĕне, ашшĕпе* т.ыт.те).

**Глагол.** Унăн пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем. Глагол вăхăчĕсем: хальхи вăхăт, пулас вăхăт, иртнĕ вăхăт.

**Паллă ячĕ.** Унăн пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем. Вăл япала ячĕпе тата глаголпа çыхăнни. Япала ячĕпе тата глаголпа çыхăннă паллă ячĕсем вĕçленменни. Пĕрешкел е çывăх пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем *(илемлĕ, капăр, хитре, чипер).*

**Хисеп ячĕ.** Шут тата йĕрке хисеп ячĕсем.

**Предложени.** Калуллă, ыйтуллă тата хистевлĕ предложенисем. Кăшкăруллă предложени. Предложенин тĕп членĕсем - подлежащипе сказуемăй. Предложенин кĕçĕн членĕсем. Предложенисене кĕçĕн членсемпе анлăлатасси.

**Орфографипе орфоэпи.** Э, *е, ă, ю, я* сас паллисемпе усă курма пĕлесси. Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсенче б, г, *д, ж, з, ф, ц, щ* сас паллисене тĕрĕс вулама, çырма пĕлесси.

Сăмах тĕпĕнчи вăрăм хупă сасса икĕ пĕр пек сас палли çырса палăртасси: а) *çăрттан, паттăр, параппан, суккăр, маттур, тăвайкки, тĕттĕм, турилкке;* ă) *пĕрре, иккĕ, виççĕ, пиллĕк, çиччĕ, аллă; б) ачашшăн, хуллен, вăрттăн, пысăккăн, сгшĕссĕи, шуррăн;* в) *валли, хыççăн.*

Хутăш сăмахри *ч* умĕнчи [л'], [н'] хупă сасăсен çемçелĕхне ятарласа палăртманни: калча, мунча, пăнчă, шалча, вăлча, анчах, хупăлча.

*Ç, ч* сас паллисем хыççăн *ы* е *и* çырасси: а) *çыру, çын, çырма, чылай, чыс, çывăх, çырла;* ă) *çимĕç, чикĕ, читлĕх, çинче.*

Уçă е [л] сасăпа пĕтекен сăмах тĕпĕ çумне *-лă(-лĕ), -ла(-ле)* аффикссем хушăнса пулнă сăмахсенче икĕ пĕр пек сас палли (лл) çырасси: *а)лаша-лашалла, ĕне-ĕнелле, футбол-футболла, лапта —лапталла, пукане — пуканелле, шашка — шашкăлла;* ă) *сухал - сухаллă.*

Нумайлă хисеп аффиксĕнчи [с] сасса (вăл умĕнхи [ш], [ç] сасăсемпе пĕрпекленнĕ тĕслĕхсем) тĕрĕс палăртасси: *юлташсем, тантăшсем, чăрăшсем, лĕпĕшсем, чĕкеçсем.*

Хальхи вăхăтри пĕрреллĕ хисепри глаголсене тĕрĕс каласси, çырасси: *ташлатăп, вĕренетĕп, ĕçлетĕп, юрлатăп, вĕренетĕн, ĕçлетĕн, ташлать, юрлать, вĕренет, ĕçлет.*

**Таса та илемлĕ çырасси**

Çыру гигиенин хăнăхăвĕсене çирĕплетесси. Пĕр йĕр тăрăх çырма хăнăхтарасси. Кăткăс ĕлкеллĕ сас паллисемпе вĕсен çыхăнăвĕсене хăвăртрах, таса та илемлĕ çырасси.

**Таса та илемлĕ, тĕрĕс çырмалли сăмахсем:** *автобус, автомобилÿ, арçын ача, ăс-тăн, ăшшăн, бригада, велосипед, виçĕм кун, грузовик, диктант, ĕç халăх, задача, зарядка, шăнкăрав, инке, йĕлтĕр, йĕпе-сапа, йĕри-тавра, канфет, карçинкка, кăсăя, кроватÿ, Кремлÿ, отличник, параппан, пограничник, пуйăс, радио, расписани, союз, çеçен хир, çĕр улми, çĕр-шыв, çил-тăвăл, çил-тăман, çулталăк, телевизор, тумтир, тыр-пул, ула такка, хĕр ача, чĕрчун, чукун çул, шăмат кул, шофер, ытлари кун, эмел, эрне кун, юн кун, юхан шыв, ял-йыш, ял хуçалăх, январь.*

## 4-МĔШ КЛАСС

Çыхăнуллă пуплев. Текст. Унăн темипе тĕп шухăшĕ. Текст тытăмĕ (композици).

Изложенипе сочинени планĕсене ушкăнпа тата пĕччен тăвасси.

Планпа усă курса 80-90 сăмахлă текст тăрăх тулли е кĕске изложени çырасси.

Пурнăçра пулса иртнĕ пĕр-пĕр ĕç çинчен ушкăнпа хатĕрленнĕ хыççăн пĕчĕк ăслав (сочинени) хайлассиi.

Пуплев этикечĕ. Каланине хирĕçлесси: вашаватлăх тата тӳрккеслĕх. Каçару ыйтасси, ӳкĕнĕве палăртасси, ашшĕ-амăшне, тус-тăвана уяв ячĕпе саламласси.

Ĕç хучĕсем. Шкулти хаçатпа, Шупашкарта тухса тăракан ача-пăча хаçат-журналĕпе çыхăну тытма хистесси. Пĕлтерӳ çырма хăнăхтарасси.

**Сăмах йышне ӳстересси, унпа усă курма пĕлнине çирĕплетесси. Сăмахсене тĕрлĕ мелпе ушкăнласси**

**Апат-çимĕç ячĕсем,** вĕсемпе çыхăнакан ытти пуплев пайĕсем: апельсин, груша, какао, кофе, крахмал, лимон, мандарин, пăрăç, персик, рагу, рассольник, сарделька, студень, сыр, тефтель, шницель;

йӳçĕ (тутлă) чуста, çĕр улми крахмалĕ, грек мăйăрĕ, арахис мăйăрĕ, шĕшкĕ мăйăрĕ, кедр мăйăрĕ, тутлă пăрăç, хура пăрăç, аш рассольникĕ, груша компочĕ, шăратнă сыр, чăмламалли резинка, çăра чей, симĕс чей, йӳçĕтнĕ купăста (пан улми);

чуста хур, чуста хăпарнă, чей пĕçер, консервла, пăрăçла, хĕрхӳлен (тĕслĕх, çу), чĕлхӳне çăтăн! (питĕ тутлă);

кĕрпек, сĕтек, тăварак, хĕрхӳ (апат), шывак (сĕт, кĕсел).

**Çут çанталăкпа, йĕри-тавралăхпа çыхăнакан сăмахсем:** Алтăр çăлтăр, Шурăм пуç çăлтăрĕ, тӳпе, Çурçĕр çăлтăрĕ, ейӳ, лачака, океан, континент, тӳремлĕх, вулкан, материк, полюс, тундра; юшкăнлă, шурлăхлă, лачакаллă.

**Ӳсен-тăран ячĕсем:** ама хупахĕ, шăнăр куракĕ, тал пиçен, ут куçĕ, авăн хаяр ути, куян купăсти, алоэ, кактус, йӳçĕ курăк, ниш курăкĕ (лантăш), шапа пăтти, сарă чăпăл курăкĕ, шыв лилийĕ, шыв курăк (водоросли).

**Тискер кайăк ячĕсем:** жираф, дельфин, кит, крокодил, морж, ондатра, песец, пурăш, сăвăр, тюлень, хăнтăр, шашка, шăши, юс; ондатра тирĕ, сăсар çуха.

**Хурт-кăпшанкă ячĕсем:** ăман, вăрăм туна, вис, йĕп вăрри, кăпшанкă, кăткă, кĕве, лĕпĕш, нăрă, пăван, сăвăс, сăвăслан, сăпса, сĕлĕх, таракан, уяр, хăнкăла, хурт, шăна, шăрчăк, шĕвĕрĕлчен, шĕкĕ, эрешмен; хурт-кăпшанкă, хурт-хăмăр, шăна-пăван, личинка, вĕлле хурчĕ, кăткă тĕми, кĕве хурчĕ, купăста лĕпĕшĕ, лĕпĕш хурчĕ, тислĕк нăрри, шыв нăрри, сăпса йăви, тĕкĕл тура йăви, сăрă хурт, хурт ами, шăрчăк чăрăклатать, эрешмен карти.

**Чĕлхене ансат тишкересси**

Чĕлхе пĕлĕвĕн терминĕсемпе паллашасси. Сăмах пулăвĕ. Аффикссем хушăнса ҫĕнĕ сăмахсем пулни. Хутлă сăмахсем. Мăшăр сăмахсем. Сăмахсене икĕ хут калани.

**Япала ячĕ.** Ӳкĕмсем (падежсем). Текстри, предложенири япала ячĕсем мĕнле падежрине вĕсен ыйтăвĕсем тăрăх пĕлесси. Хупă сасăпа *(юлташ, телей, сунар, пĕлĕт, хĕвел, кун)* тата [а], [э]? [ă], [ĕ], [у], [ӳ], [и] сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсен вĕҫленĕвĕ.

**Сăпат ылмашĕсене** текстра тупасси, вĕсем хăш падежрине палăртасси.

**Глагол** вăхăт, сăпат тата хисеп тăрăх улшăнни. Унăн пурлă тата ҫуклă формисем.

**Паллă ячĕсен** тĕп, танлаштаруллă тата вăйлă степенĕсем, вĕсемпе пуплевре усă курасси. Паллă ячĕсем -акĔ-ек, -ăкĔ-ĕк, -кăнĔкĕн, -чăнĔ-чĕн, -лăĔ-лĕ аффикссем хушăнса пулни.

**Предложени.** Предложенин пĕр йышши членĕсем. Вĕсем пĕтĕҫтерӳпе (союзпа) *(анчах, ҫапах, тата, та(те)* тата пĕтĕҫтерӳсĕр (союзсăр) ҫыхăнни.

Пĕр йышши членлă предложенисем тума пĕлесси.

**Орфографи** тата **орфоэпи.** Мăшăр сăмахсене ҫырасси: *сĕтел-пукан, сĕт-ҫу.*

Икĕ хут калакан сăмахсене ҫырасси: *ял-ял, хĕрлĕ-хĕрлĕ, пин-пин.*

**Сăпат ылмашĕсене** тĕрĕс каласси, ҫырасси: *эпĕ (эп), эсĕ (эс), эпир (эпĕр), эсир (эсĕр); манăн (ман), санăн (сан); манра, манран, санра, санран, пирĕнте (пирте), сирĕнтен (сиртен); вăл -унăн, ăна, унран.*

**Япала ячĕсен падеж формисене** тĕрĕс ҫырасси: *ҫыру - ҫырăвăн, ҫырăва; сăвă - сăввăн, сăвва; пĕрчĕ - пĕрчĕн, пĕрче; мăкăнь -мăкăньпе е мăкăньре; район -районта е районра.*

**Глаголăн ҫак формисене** тĕрĕс каласси, ҫырасси:

1) хальхи вăхăтăн сăпат формисене *(ҫыратăп - ҫырмастăп, ҫыратăн - ҫырмастăн (ҫырап - ҫырмап, ҫыран мар), ташлатпăр - ташламастпăр, ĕҫлетпĕр-ĕҫлеместпĕр, вулатпăр-вуламастпăр, вĕренетпĕр - вĕренместпĕр, ташлатăр - ташламастăр, ĕҫлетĕр - ĕҫлеместĕр, вĕренетĕр - вĕренместĕр, килетĕр - килместĕр, ҫыратӳ - ҫырмастӳ (ҫырат - ҫырмас мар);*

2) пулас вăхăт формисене *(ту — тăвăп, тăвăн, тăвĕ; çи — çиййĕн,*
*çиййĕп, çийĕ);*

3) [р] сасăпа пĕтекен *йĕр, кĕр, кӳр, пар, пер, пыр, тăр, хур, яр* глаголсен иртнĕ вăхăт формисене: *кĕтĕм, кĕтĕн, кĕчĕ, кĕтĕмĕр* ([р] сасă тухса ӳкет).

Çемçе [л'], [н'], [т'] сасăсемпе пĕтекен сăмах тĕпĕ çумне -лă(-лĕ) аффикс хушăнса пулнă сăмахсенче *ь* çырасси: *кукăльлĕ, супăньлĕ, тетрадьлĕ, медальлĕ, портфельлĕ.*

**Паллă ячĕсен вăйлă степенĕнче** *(хуп-хура, тӳп-тӳрĕ, ем-ешĕл, çап-çутă, сап-сарă, кăн-кăвак)* дефис лартасси.

**Пунктуаци.** Пĕр йышши членлă предложенисенче хӳреллĕ пăнчă лартасси.

### Таса та илемлĕ çырасси

Графика хăнăхăвĕсене малалла аталантарса пырасси. Сăмахсемпе предложенисене хăвăртрах çырма хăнăхтарасси. (Кирлĕ сăмахсемпе предложенисене учитель хăй суйласа илет.)

## Чăваш пуçламăш шкулĕн 4-мĕш класĕнче чăваш чĕлхине вĕрентесси

### Ăнлантарни

Программăра чăваш чĕлхине вĕрентме IV класра 102 сехет уйăрнă. Çапла вара чăваш чĕлхи урокĕсем валли эрнере 3-шер сехет палăртмалла. Ăславлă çыру урокĕсем икĕ эрнере пĕрер пулмалла.

IV класра тĕрлĕрен хăнхтару пурнăçланă май вĕренекенсем тĕрĕс çырассин йывăрлăхĕсене асăрхама-туйма, орфографин чылай правилипе усă курма пуçлаççĕ. Çапла вара, сăмахăн сасăпа сыпăк тытăмне тишкерес хăнăхусене лайăхлатса пырса, вĕсене сăмахăн пĕлтерĕшлĕ пайĕсене асăрхамалли хăнăхтарусемпе çыхăнтарса ачасен тĕрĕс çырас мехелне вăйлатсах пыратпăр. Унсăр пуçне фонетикăпа графика тишкерĕвĕ ачасен пуплев культурине (сасăсене уçăмлăн кăларасси, сăмахсене литература чĕлхинчи пек каласси, пуплев янравлăхĕ) лайăхлатассипе тачă çыхăнмалла.

IV класра маларах вĕреннĕ пуплев пайĕсемпе тĕплĕнрех паллаштарма, япала ячĕсем мĕнле ӳкĕмрине чухлама, терминпа усă курма, анлă усă куракан сăмахсене тĕрлĕ ӳкĕмре лартма, тĕрĕс калама тата çырма вĕрентмелле.

IV класра ачасем пĕр йышши членлă (япала ячĕпе паллă ячĕсенчен, глаголтан пулнă тĕслĕхсем) предложенисемпе паллашаççĕ. Ку предложенисене тĕрĕс интонаципе калама, вĕсемпе калаçура тата çырура усă курма, пĕр йышши членсене çырура хӳреллĕ пăнчăпа (ансат тĕслĕхсем) уйăрма вĕренмелле.

Кĕçĕн çулхи ачасем малашне мĕнле вĕренсе пырасси, ăс-тăн илесси пуплевпе шухăшлав аталанăвĕнчен килет. Çавна кура çыхăнуллă пуплев хăнăхтарăвĕсем кашни урокрах тĕп вырăнта пулмалла. Вĕсене текста вулассипе, тăнлассипе çыхăнтармалла, вĕсемпе пĕрлех текст тăвасси те, ăна çырасси те кашни класрах тивĕçлĕ вырăн йышăнмалла.

Кĕçĕн классенче вĕренекенсен çыхăнуллă пуплевне аталантарасси, пĕтĕмĕшле илсен, çыхăнуллă текст тума вĕрентессипе пĕр килет. Вуланă е итленĕ калав, выляса кăтартнă диалог – ачасемшĕн çавăн евĕр текст тумалли тĕслĕхсем.

Çыхăнуллă пуплев хăнăхтарăвĕсене вулав урокĕсенче те, чĕлхе урокĕсенче те ирттермелле, вĕсене сăмах вĕççĕн каласа та, çырса та пурнăçламалла. Чĕлхе урокĕсенче, тĕпрен илсен, изложенисемпе сочиненисем, вулав урокĕсенче вара сăмах вĕççĕн тумалли ĕçсем ытларах сĕнмелле.

IV класс программинче тăван чĕлхе курсĕнче ятарласа ăславлă çыру урокĕсем палăртмалла. Ăслав çыру урокĕсем чĕлхе урокĕсемпе тачă çыхăнса тăмалла. Пуçламăш шкулти изложенисемпе сочиненисем ытларах калуллисем пулмалла. IV класра вара сăнлав тата уйлав тексчĕсене вĕрентсе пымалла. Ĕç хучĕсен питĕ кирлĕ ансат тĕсĕсене (çыру, пĕлтерӳ) çырма вĕрентессине те çав уроксенчех туса пымалла.

Çыхăнуллă пуплеве аталантарассин шутне калаври пайсене, уйрăм предложенисен тĕрĕс сыпăнтарма вĕрентесси те кĕрет. Çакна шута илсе ачасене сăмах вĕççĕн каламалли, çырма куллен хăнăхтарса пымалла. Таса çырмалли хăнăхтарусене IV класра урокри грамматика тата орфографи материалĕпе çыхăнтарма тăрăшмалла. Пуçламăш шкулта вĕренекен ачан çырăвĕ тирпейлĕ, вулама меллĕ, тĕрĕс пулмалла. Таса та илемлĕ çырма вĕрентни типтерлĕ пулма, кирек мĕнле ĕçе те тӳрĕ кăмăлпа, тăрăшуллă тума хăнăхтарать.

## 1. Тематическое планирование уроков литературного чтения на родном (чувашском) языке

### 1 класс

| Раздел теми, сехет шучĕ | № п/п | Урок теми | Кăмăл-сипете аталантарасси | Универсаллă вĕренӳ ĕç-хĕлĕсем | Предмет ăшĕнчи пĕлӳ, хăнăху | Ачасен ĕç-хĕлĕ | Хушма материал |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| **Литература вулавĕ. 1-мĕш чĕрĕк (9 сехет)** | | | | | | | |
| **Шкула каяр-ха** | 1. | Эпĕ халĕ шкул ачи. | Ачасене вĕсен пурнăç йĕрки мĕнле улшăнни | Ачасене кун йĕркине пăхăнма, | Шкул йĕркисемпе паллаштарни, вĕсене | «Пĕчĕкçĕ пĕрчĕ» кĕнекепе | «Пĕчĕккисен кĕнеки»: |

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| **вĕренме. (2 сех.)** | | | çинчен калаçтарни, шкул ачин яваплăхĕпе, тивĕçĕсемпе паллаштарни, шкула юратма вĕрентни. | учитель вуланине итлеме тата ăнланма, хăйсен туйăмĕсене сăнаса пама хăнăхтарни. | ăнланса, ăса хывса куллен пурнăçлаттарни.Çыхăнуллă калаçма вĕрентни. Хайлав тата илемлĕ хайлав ăнлавсемпе паллаштарни, вĕсене туйма, ăнланма вĕрентме пуçласси. | паллашни, «Эпĕ халĕ шкул ачи» калаçу ирттерни. | Хрестомати/ Т.В.Артемьева, Г.Ф.Трофимова/ Стр.279 |
| | 2. | Хайлав. Илемлĕ хайлав. | Кĕнекери сăнарсемпе туслашни, шкул ачин тивĕçĕсене асăмласа çирĕплетни. | | | | |
| **Халăх сăмахлăхĕ. (4 сех.)** | 3. | Халăх сăмахлăхĕ (сăвви-юрри) | Пуплешӳ, чĕнӳ-йыхрав, шутлав сăввисене мĕнле тĕллевпе каланине, мĕнле йĕркеленсе пынине аталантарни. Тупмалли юмахсен хăйьевĕрлĕхне, тытăмне сăнатарни. Вĕсемпе пурнăçра вырăнлă усă курма вĕрентни. | Кун пек сăвăсене кашни сасса, кашни сăмаха такăнмасăр, уçăмлă каламаллине палăртни. Мăшăрпа ĕçлеме хăнăхтарни. | Халăх сăмахлăхĕнчи тĕрлĕ сăвăсене танлаштарма, вĕсене кăмăл-туйăма палăртса, хăвăрткаларăшсене такăнмасăр калама вĕрентни, артикуляцие çирĕплетни.  Тупмалли юмахсем икĕ пайран тăнине, кашни пайĕнче ытарлăх пуррине палăртасси. Вĕсене хайланă чухне танлаштару тата сăпатлантару  мелĕсемпе усă курма вĕрентни. | Килĕшнĕ сăвă тăрăх ӳкерчĕк тăвасси. Шутлав сăввисене аса илсе вăйă вылясси. . | «Пĕчĕккисен кĕнеки»: Хрестомати/ Т.В.Артемьева, Г.Ф.Трофимова/ Стр.186-202 |
| | 4. | Чĕнӳ-йыхрав сăвви-юрри. Шутлав сăввисем | | | | | |
| | 5. | КТВ.А.Отачкин. Шкула. Ю.Силэм.Тимлĕ итленĕ. | | | | | |
| | 6. | Хăвăрткаларăшсем. Тупмалли юмахсем. | | | | | |
| **Юмах юпа тăрринче… (1 сех)** | 7. | Юмахсем. «Пукане юмахĕ», «Упапа хĕр ача». | Пурнăçра чеерех те тавçăруллăрах пулма вĕрентни. Юмах тытăмĕн хăш-пĕр вăрттăнлăхĕсене уçăмлатма пулăшасси. | Ыйтусене ăнланма, вĕсене хуравлама, хăйсен шухăшне уçăмлă палăртма вĕрентни. Юмахсене вуланă чух тимлĕ | Юмах жанрĕн хăйьевĕрлĕхне ăнлантарма пуçласси. Ачасене юмах логикине, сюжетне сăнатарасси. | «Кам юмахçă пуласшăн?» вăйă вылясси. | «Пĕчĕккисен кĕнеки»: Хрестомати/ Т.В.Артемьева, Г.Ф.Трофимова/ Стр.205-216 |

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | | пулмаллинекалани. | | | |
| **Вăйă вылятпăр. (2 сех.)** | 8. | Сăвăласа çырнă хайлавсем. | Ачасене сăвăлласа çырнă хайлавсемпе паллаштарасси. Сăвăç пире тĕнчене урăхларах курма пулăшнине ăнлантарни. | Итленĕ хайлавсен шухăшĕсене каласси, ыйтусем лартасси, туллин хуравласси. | «Рифма» ăнлава (термина асăнмасăр) уçăмлама пулăшасси, «автор», «сăвăçă» ăнлавсемпе паллашасси. | «Пĕрле вĕçлер-ха» вăйă вылясси. . | «Пĕчĕккисен кĕнеки»: Хрестомати/ Т.В.Артемьева, Г.Ф.Трофимова/ Стр.191 |
| | 9. | Çыравçă хайланă юмах. В.Сутеев «Шăшипе кăранташ» юмахĕ. | | | | | |
| **2 – мĕш чĕрĕк (7 сехет)** | | | | | | | |
| | 10 | КТВ. В.Давыдов-Анатри.Таван сершыв. | Таван сершыва юратма, хисепеме верентесси. | Ваттисен самахесемпе еслесси, весене анлантарасси. | Таван сершыв синчен каласа парасси. | Таван яла укерессн, санласа парасси.. | «Чевелти» С.10-18 |
| **Теттесем. (1 сех.)** | 11. | Шÿтлĕ сăвăсем. П.Çăлкуç «Ăмсанса пăхать Кампур», М.Волков «Пăрçа хуралçисем», Н.Карай «Пулăра» | Шÿте ăнланма, ачасене хăйсене те шÿтлеме вĕрентсе пырасси. | Ачасем хăйсемпе кулăшла пулса иртнĕ самантсене аса илсе каласа парасси. Группăсемпе ĕçлеме хăнăхтарни. | Сăвăлласа çырнă хайлавсене итлеме, туйма-ăнланма малалла вĕрентесси. | Словарь ĕçĕ. «Хăш ушкăн нумайрах ыйту парать?» вăйă вылясси. | «Пĕчĕккисен кĕнеки»: Хрестомати/ Т.В.Артемьева, Г.Ф.Трофимова/ Стр.192,236 |
| **Ачасем çинчен. (2 сех.)** | 12. | Прозăпа çырнă хайлавсем.«Калав»ăнлав. ( Н.Ишентей «Хуплу пĕçерни», П. Яккусен «Анне», И.Микулайĕ «Арбуз» суйласа ил) | Ачасене хутшăну этикечĕн ансат йĕркисемпе паллаштарни, хутшăнупа çыхăннă хăш-пĕр ăнлавсене уçăмлатни. Атте-аннене юратма вĕрентни. Пĕчĕкренех ĕçе хăнăхтарни. | Ачасем хăйсен шухăшне тĕрĕс те туллин пĕлтерессн, сăнарсен тата хăсен ĕçне хаклама пĕлесси. | Калав мĕн çинчен пулнине ăнланма, калав темине уçăмлатма вĕрентесси. Калав темипе унта мĕн калани, ячĕ мĕнле çыхăннине, калав ятĕнче унăн теми палăрнине ăнлантарасси. | Словарь ĕçĕ. | «Пĕчĕккисен кĕнеки»: Хрестомати/ Т.В.Артемьева, Г.Ф.Трофимова/ Стр.224 |
| | 13. | Калавра мĕн çинчен калани. Калав ячĕ. Л.Сарине «Арман авăртать» | | | | | |
| **Чĕр чунсем çинчен. (3 сех.)** | 14. | Юптару. П.Çăлкуç «Хур аçи», Ю.Мишши «Лашапа кашкăр». | Мĕн çинчен те пулин шахвăртса, юптарса каласа кăтартнине, юптарусенче чĕр | Юптарусене илемлĕ, палăртуллă вуламаллине | «Юптару» ăнлава уçăмлаттасси, çак жанр хăйьевĕрлĕхне сăнатарасси, ăса | Словарь ĕçĕ. | «Пĕчĕккисен кĕнеки»: Хрестомати/ Т.В.Артемьева, |

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | чунсем çынсем пекех калаçнине туйса илме пулăшасси.<br>Чĕр чунсене юратма , пĕр-пĕринпе туслă пулма вĕрентни. | каласа хăварни. Вĕсенчи сăнарсене хаклама хăнăхтарни. | хывтарасси; ку жанрпа çырнă хайлавсене ыттисенчен уйăрса илме вĕрентесси. | | Г.Ф.Трофимова/ Стр.227 |
| | 15. | КТВ. Г.Ирхи. Асамат кепере. Тетре. | | | | | |
| | 16. | О.Печников «Усала вĕрентнĕ путек», Е.Чарушин «Томка тĕлĕкĕсем». В.Сутеев «Кăмпа айĕнче». | | | | | |
| **Тавралăх – асамлă тĕнче. (1 сех.)** | 17. | А.Пăртта «Çумăр ташши», А.Ыхра «Пукан», Л.Сарине «Вăрманта». | Çутçанталăкри пулăмсене, чĕр чунсене сăнама, итлеме,тимлеме хăнăхтарса пырасси. | Хăйсем тĕллĕн калав тăвасси, сăввине илемлĕ,палăртуллă вулани. | Пурнăçра кашни япалан, кашни пулăмăн ячĕ пуррине ăнлантарасси. Хайлавсенеятпамавĕрентес си. | Пĕр-пĕрчĕрчун çинченкалавтăва сси. | «Пĕчĕккисенкĕ неки»: Хрестомати/ Т.В.Артемьева, Г.Ф.Трофимова/ Стр.259 |
| **3- мĕш чĕрĕк (10 сехет)** | | | | | | | |
| **Килсе çитрĕ хаваслă хĕл. ( 3 сех.)** | 18. | В.Эктел «Юр», П.Çăлкуç «Ытарми хĕл», Л.Смолина «Тăвайкки». | Хĕллехи çутçанталăка сăнама, юратма вĕрентни.Юмахра чăн пурнăçра пулма пултарайман ĕçсем çинчен каланине ăнлантарни. | Ачасен илемлĕ, палăртуллă вулавне аталантарасси, вуласа тухни тăрăх ыйтусем лартасси тата вĕсем çине туллин хуравласси. Ачасем хăйсен ĕçне хаклама пĕлесси. | «Строфа» ăнлава уçăмлатасси, сăвăçсем чĕрĕ маар япаласене чĕрĕ пек туса кăтартни сăвăсене курăмлăрах, витĕмлĕрех тунине, пĕр шухăша тем тĕрлĕ те палăртма пултарнине ăнлантарни. | Сăвă çаврăмĕсемпе ĕçлесси.<br><br>Тăвайккинче ярăнни çинчен ӳкерчĕк тăвасси.<br><br>Учебникри ыйтусемпе ĕçлени. | «Пĕчĕккисен кĕнеки»: Хрестомати/ Т.В.Артемьева, Г.Ф.Трофимова/ Стр.143 |
| | 19. | В.Эктел «Хĕл Мучи», П.Çăлкуç «Тăвайкки», Е.Кузнец «Çеменпе Сивĕ Мучи». | | | | | |
| | 20. | КТВ.Г.Мальцев. Урай шални.В.Раштав. Шарпак перчи. | | | | | |
| **Ача – пăча сăмахлăхĕ (2 сех.)** | 21. | Кулленхи сăвă-юрă. Чĕнӳ-йыхрав сăвви-юрри, хăвăрт сăмах, тупмалли юмахсем. | Пӳплешӳллĕ сăвăсене, пулмасла такмаксене мĕнле тĕллевпе каланине, вĕсем мĕнле | Ачасене рольпе вулама хăнăхтарасси. Çакăн евĕр хайлавсене вуланă | «Ача-пăча сăмахлăхĕ» ăнлавне уçăмлатасси. «Тема», «автор» терминсемпе паллаштарасси. Халăх | Словарь ĕçĕ.<br><br>Чĕнӳ-йыхрав сăвви хайласси, тупмалли юмах | «Пĕчĕккисен кĕнеки»: Хрестомати/ Т.В.Артемьева, Г.Ф.Трофимова/ |

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | йĕркеленнипе паллаштарасси, тупмалли юмахсен хăйьевĕрлĕхне, тытăмне сăнатарасси. Вĕсемпе вырăнлă усă курма хăнăхтарасси. | чух тимлĕ пулма вĕрентни. | сăмахлăхĕнчи юмах-халапсен, сăвă-юрăсен, шӳтсен пĕтĕмĕшле авторĕ халăх пулнине ăнлантарасси. | ăсласси.<br><br>Вĕççĕр такмак сăвăласси. | Стр.189-199 |
| | 22. | Пулмасла халап. Вĕççĕр такмак. Шӳт. | | | | | |
| **Юмах ятăм, юптартăм. (1 сех.)** | 23. | Улăп халапĕсем. «Тилĕпе Качака таки». | Ачасене ăс-хакăл пухма, ырă та тӳрĕ чунлă пулма, пурнăç çине чĕрĕ куçпа пăхма вĕренме пулăшасси, чăваш халăх юмахĕсенче çынсен кăмăлне чĕр чунсенче кăтартнине ăнлантарасси, пĕр-пĕринпе туслă пурăнма вĕрентни. | Юмахри сăнарсене хаклама пĕлесси. Ачасем хăйсен шухăшне тĕрĕс те туллин пĕлтерни. | Юмахсене илемлĕ – сасса кирлĕ пек улăштарса, харпăр хăй унта пулса курнă евĕр каласа пама хăнăхтарасси, юмаха пурнăçпа çыхăнтарма вĕрентесси. | Учебникри ыйтусемпе ĕçлесси. Словарь ĕçĕ. «Çарăк» юмаха лартса парасси. | «Пĕчĕккисен кĕнеки»: Хрестомати/ Т.В.Артемьева, Г.Ф.Трофимова/ Стр.205-215 |
| **Пирĕн вăйă-кулă (1 сех.)** | 24. | Л.Сорокина «Пукане», Ю.Силэм «Шак-шак-шак», Р.Сарпи « Ташлать Илемпи». | Туссен пĕр-пĕрне пулăшмаллине, вĕрентнĕ чух кăмăллă та ăшă пиллĕ пулмаллине хăнăхтарасси. | Хайлавсенчи сăнарсене хаклама пĕлесси.<br>Ачасен илемлĕ, палăртуллă вулавне аталантарасси, вуласа тухни тăрăх ыйтусем лартасси тата вĕсем çине туллин хуравласси. | Сăвăпа калава уйăрма вĕрентесси, паллă калавçă сăвăççсемпе паллаштарасси. | Словарь ĕçĕ. | «Пĕчĕккисен кĕнеки»: Хрестомати/ Т.В.Артемьева, Г.Ф.Трофимова/ Стр.217 |
| **Ачасем çинчен ( 3 сех.)** | 25. | КТВ.Юмах юпа тарринче. Чахапа услам су. Чаваш халах юмахе. | Чăвашсем ĕçчен халăх пулнине, ачисене çамрăклах ĕçе хăнăхтарнине, | Ыйтусене ăнланма, вĕсене хуравлама, хăйсен шухăшне уçăмлă палăртма | «Калуллă текст», «тĕп сăнар» ăнлавсене уçăмлатасси. Калавăн пайĕсемпе паллаштарасси, | «Пĕрле вĕçлер-ха» вăйă вылясси. | «Пĕчĕккисен кĕнеки»: Хрестомати/ Т.В.Артемьева, |

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | аслисен сăмахне итлемеллине, тăвансене пулăшмаллине, ваттисене хисеплемеллине, хăйсене çын çинче тирпейлĕ тытмаллине палăртса хурасси. | вĕрентесси. | вĕсене уйăрма вĕрентесси. | Килĕшнĕ калав патне ÿкерчĕк тăвасси. Ваттисен сăмахĕсемпе ĕçлесси. | Г.Ф.Трофимова/ Стр.236 |
| | 26. | В.Голявкин «Инкек», Р.Сарпи.«ÿкерчĕк». А.Ыхра калавĕсем, Н.Карай «Макăрмарĕ». | | | | | |
| | 27. | М.Салихов «Усăллă кану», В Осеева «Ырă ĕç», Н.Рогачёв «Пулăçсем». | | | | | |
| **Чĕр чунсем çинчен (3 сехет)** | 28. | И.Яковлев «Хураçка», А.Ыхра«Шурка»,Е.Чарушин «Томка ишме вĕренни». | Чĕр чунсене юратма , вĕсем те çынсем пекех туйма пултарнине, хăйсене майлă ăсĕ пуррине палăртма вĕрентесси. | Хайлавсем патне ыйтусем лартса, хуравсене тĕслĕхсемпе çирĕплетсе пĕтĕмлетÿ тăвасси. | Калаври тĕп сăнарсене тупасси, ăна пайсем çине уйăрассине çирĕплетсе хăварасси. | Словарь ĕçĕ. Тупмалли юмахсемпе ĕçлесси. | «Пĕчĕккисен кĕнеки»: Хрестомати/ Т.В.Артемьева, Г.Ф.Трофимова/ Стр.237 |
| | 29. | К.Чуковский «Чĕрĕп кулать», Э.Шим «Шапапа калта», «Пакшапа пăрăнтăк». | | | | | |
| | 30. | КТВ. Г.Мальцев Ытарайми анне. Ю.Силэм. Кавак сурах. | | | | | |
| **Тавралăх – асамлă тĕнче (3сех.)** | 31. | Комплекслă тĕрĕслев ĕçĕ. | Вулав хăвăртлăхне тĕрĕслесси. | Ачасен илемлĕ, палăртуллă вулавне аталантарасси, вуласа тухни тăрăх ыйтусем лартасси тата вĕсем çине туллин хуравласси. | «Сăнлав» ăнлава уçăмлатасси, çутçанталăкри пулăмсене е япаласене сăмахсемпе хитре ÿкерчĕксем пек çырса кăтартнине ăнлантарасси. | «Çуркунне темăпа сăмахлă ÿкерчĕк тăвасси. | «Пĕчĕккисен кĕнеки»: Хрестомати/ Т.В.Артемьева, Г.Ф.Трофимова/ Стр.241 |
| | 32. | С.Соколинский «Çумăр», П.Çăлкуç «Çумăр умĕн». | Тавралăха юратма , мĕнле улшăннине | | | Тупмалли юмахсемпе ĕçлесси. | |

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | 33. | А. Ыхра «Çурхи илем». Х.Çеменĕ «Çуркунне». В.Тарават «Кăнтăр çĕршывĕнче». | сăнама вĕрентни. | Ачасем хăйсен ĕçне хаклама пĕлесси. | | | |

**Тематика плане**
**2 класс**

| Урокан № | Урок теми |
|---|---|
| 1. | **Шкул** а Хăрушсăрлăх  правилисене аса илесси. «Чи савăнăçлă кун» |
| 2. | «Чернил» И.Шухши |
| 3. | **Мен-ши вал таван сершыв** «Чăваш çĕршывĕ» М. Юхма |
| 4. | «Çĕршывăмăр пуçламăшĕ» П.Хусанкай |
| 5. | «Чăвашла» Л. Мартьянова |
| 6. | Асатте- асаннесен çырулăхĕ. А. Трофимов |
| 7. | «Эпир пулнă , пур, пулатпар!» П.Хусанкай |
| 8 | **Халах самахлахенчен.** «Саванас» К. Чуковский |
| 9 | Сурхури юрри. |
| 10 | Саварни юрри |
| 11 | «Череп» Н. Ытарай |
| 12 | Улапсем |
| 13 | Асамат кепере |
| 14 | **Юмахсем.**Кинеми, мануке тата Чапар чах. |
| 15 | «Саткан упа сурисем. |
| 16 | «Силпе хевел». |
| 17 | «Сара аист» |
| 18 | «Ухмах Иван.» |
| 19 | «Сырлана кайсан» Н. Карай |
| 20 | «Пурта» А. Толстой |
| 21 | **Керкунне**        «Кĕр çитрĕ» М. Трубина |

| | |
|---|---|
| 23 | «Хура кĕркунне» С.Сарпай |
| 24 | «Тарнасем» Илпек Микалайе |
| 25 | «Ылтăн çумăр» Н.Сладков |
| 26 | «Хĕл ларас умĕн» С.Аксаков |
| 27 | **Эпир тусла та хавасла ачасем** Шкул ачи Петер Хусанкай |
| 28 | «Чăрсăр автансем» А. Кăлкан |
| 29 | «Микула пичче кучченеçĕ» О. Савандеева |
| 30 | «Сылтăм алăпа сулахай алă» И. Шухши |
| 31 | «Вăт епле вăл пулăшать» А. Барто |
| 32 | **Ес т елей те саванас курет**«Пахча хуралçи» Н. Иванов |
| 33 | «Кетус» А.Калкан |
| 34 | «Есчен Нарспи» К. Иванов |
| 35 | **Хел.«**Юр çунă» А. Алка |
| 36 | «Юр». Н. Шелепи |
| 37 | «Раштав уйăхĕ» Н. Матвеев |
| 38 | «Хĕллехи каç» А. Пушкин |
| 39 | «Хĕллехи вăрман» Хумма Çеменĕ |
| 40 | **Таван кил йышра.**Юратна анна |
| 41 | «Хаш вахатра сыварать-ши анне |
| 42 | Ан куренсем ,атте. |
| 43 | Амаше меншен макарна |
| 44 | Библиотека кенекисем. |
| 45 | **Килче ыра суркунне.**Тумла .Калина малина |
| 46 | «Суркунне ситсен»К. Иванов |
| 47 | «Пар каять « Н.Шелепи |
| 48 | «Упа йенни» Н. Сладков |
| 49 | «Сурхи саса « Н. Николаев |
| 50 | **Чер чунсем –пирен туссем**. Тискер кайаксем.М. Пришвин |
| 51 | Ай, пакша Г Луч |
| 52 | Пураш .Хв. Уяр**.** |
| 53 | Улай Р. Сарпи |
| 54 | Чекессем меншен сивенне Г.Луч |
| 55 | «Сар автан» Н. Эревет |
| 56 | Юрă ăстисем» Г. Харлапьев |

| | |
|---|---|
| 57 | Чăх чĕппи» К. Чуковский |
| 58 | Мулкач çури» Б. Заходер |
| 59 | Çырла пиçсен» Г. Харлапьев |
| 60 | **Усен таран тенчи**.Пер йахри йывассем Н Матвеев |
| 61 | Хурлахан, ан хурлан М. Волкова |
| 62 | «Куле» Р. Сарпи |
| 63 | «Сумар» Г. Харлампьев |
| 64 | «Кас пулче» Н Шупуссынни |
| 65 | **Су уйахне кетемер.** «Малтанхи аслати» А.Алка |
| 66 | «Сумар ташшши «С Асамат |
| 67 | «Суллахи ир» С. Элкер |
| 68 | «Утара» А. Костецеий |

**Тематика планĕ**
**3 класс**

| № | Урок теми | |
|---|---|---|
| 1 | **Ак ситре сентябрьЛитература** вулавĕ предметăн 3 –мĕш класс валли палăртнă тĕллевĕсемпе задачисем. | 1 |
| 2 | Х. Уярăн «Мăйăр хуппи» калавĕ. | 1 |
| 3 | К Беляеван «Чи хаклă парне» калавĕ | 1 |
| 4 | **Чаваш сершыве** К. Ушинскин «Тăван çĕр-шыв - пирĕн анне» хайлавĕ | 1 |
| 5 | КТВ. « Шкула, ачасемер, шкула». | 1 |
| 6 | Н. Янкасăн «Лăпкă çĕр-шывра» сăвви. | 1 |
| 7 | С.Вишневскийăн «Туслăх сăмахĕ» сăвви | 1 |
| 8 | КТВ. Шкула, ачасемĕр, шкула. | 1 |
| 9 | **Керкунне** Кĕр пуçламăшĕ. Н. Исмуковăн «Кĕр пасарĕ» сăвви. | 1 |
| 10 | И.Соколов-Микитовăн«Кĕрхи вăрманта» калавĕ. М. Волковăн «Кĕрхи хурăн» сăвви. | 1 |
| 11 | О. Туркайăн «Çулçă» калавĕ. | 1 |
| 12 | Н. Янкасăн «Сивĕтет çанталăк» сăвви. | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| 13 | **Халах самахлахе** Тупмалли юмахсем. | 1 |
| 14 | Вăйă-шăпа юррисем. | 1 |
| 15 | КТВ «Ĕç – пурнăç илемĕ» | 1 |
| 16 | Çыравçăсем хайланă пулмасла халапсем. | 1 |
| 17 | Прозăлла юптарусем. Юптарусен тытăмĕ. | 2 |
| 18 | **Улап йахенчен** Мифсем. Улăп халапĕсем. | 1 |
| 19 | КТВАсамат кĕперĕ (чăваш халăх халапĕ) | 1 |
| 20 | Тĕрлĕ халăх халапĕсем, вĕсен пĕрпеклĕхĕпе уйрăмлăхĕсем | 1 |
| 21 | **Юмах юпа тарринче** Чăваш халăх юмахĕ. Чĕр чун юмахĕсем. | 1 |
| 22 | КТВ Ачалăх – савăк вăхăт | 1 |
| 23 | Тĕрлĕ халăх юмахĕсем. Йăла юмахĕсем. | 1 |
| 24 | Асамлă юмахсем. | 1 |
| 25 | Автор юмахĕсем. | 2 |
| 26 | В Эктелĕн «Хĕл пуçламăшĕ» сăвви. | 1 |
| 27 | «Хырпа Чăрăш тата Уртăш мĕншĕн яланах симĕс?» юмах. | 2 |
| 28 | КТВ Асанне арчинчи мерчен. | 1 |
| 29 | **Асамса хел** В Харитоновăн «Йĕлтĕрпе» тата А Смолинăн «Халăх хайлавĕ майлă» сăввисем. | 1 |
| 30 | **Эпир –сапайла ачасем** Н. Карайăн «Йăмăк» калавĕ. | 1 |
| 31 | М Джалилăн «Çывракан ача» тата Р.Минатулинăн «Пулăшакан» сăввисем. | 1 |
| 32 | А Кăлканăн «Наян Кампур» тата А Галкинăн «Шăна кăмпин шăпи» юптарăвĕсем. | 1 |
| 33 | Н Иванов. «Чечек çыххи». | 1 |
| 34 | КТВ. Кулленхи пурнăçпа йăла-йĕрке | 1 |
| 35 | И Шухши. «Кĕрен тўпе». | 1 |
| 36 | Г. Волков. «Пуянлăх хакне ĕçлекен çеç пĕлет». | 1 |
| 37 | Л. Ковалюк. «Хăравçă». | 1 |
| 38 | Л. Ковалюк. «Хăравçă». | 1 |
| 39 | КТВ. Вăрман калавĕсем. | 1 |
| 40 | А. Ерусланов. «Хапхаçă». | 1 |
| 41 | О. Уайльд. «Хаяр Улăп». | 1 |
| 42 | О. Уайльд. «Хаяр Улăп». | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| 43 | Исмай Исемпек. «Шăвăç витре». | 1 |
| 44 | У. Ушинскин «Вăрманти ачасем» калавĕ. | 1 |
| 45 | КТВ. Çут çанталăк тата эпĕ. | 1 |
| 46 | **Сур хаваслахе** Н. Исмукован «Çурхи тĕнче», Л. Смолинан «Çуркунне пуçланать» сăввисем | 1 |
| 47 | Н. Некрасов. «Ешĕл шав». Уйăп Мишши «Çурхи вăйă» | 1 |
| 48 | Мĕтри Кипекĕн «Çурхи вăрманта» калавĕ | 1 |
| 49 | Соколов-Микитовăн «Вăрманта» калавĕ. | 1 |
| 50 | КТВ. Çут çанталăк тата эпĕ. | **1** |
| 51 | Г. Снегирев. «Малтанхи хĕвел». | 1 |
| 52 | К. Ивановăн «Çуркунне çитсен» сăвви. | 1 |
| 53 | Н. Матвеевăн «Таврана илем кӳреççĕ», А. Артемьевăн «Çурхи кун» калавĕсем. | 1 |
| 54 | **Черчун тенчи** Н. Ишентейĕн «Аптраман кăвакалсем» калавĕ. | 1 |
| 55 | С. Элкерĕн «Кашкăрсемпе çапăçни» калавĕ. | 1 |
| 56 | Н. Иванов. «Асанпа Хураçка». | 1 |
| 57 | КТВ.<br>Йĕри-тавра пирĕн туссем. | 1 |
| 58 | Л. Ковалюк «Мулкач та тутă пултăр». | 1 |
| 59 | Л. Ковалюк. «Мулкач та тутă пултăр». | 1 |
| | | 1 |
| 60 | Н. Матвеевăн «Çара çерçи» » калавĕ. | 1 |
| 61 | Н. Матвеев. «Каюра». | 1 |
| 62 | Г. Орловăн «Кашкăр тавăрăвĕ» калавĕ. | 1 |
| 63 | **Ытарайми таван тавралах** И. Дубановăн «Эл кӳлли» калавĕ . | 1 |
| 64 | Г. Орлов. «Çухату». | 1 |
| 65 | Х. Уярăн «Тарăхнă така» калавĕ. | 1 |
| 66 | Х. Юлташевăн «Лĕпĕш», У. Мишшин «Çуллахи каникул» сăввисем. | 1 |
| 67 | КТВ | 1 |
| 68 | Петемлету уроке | 1 |

**Тематика планĕ**
**4 класс**

| № | Урок теми | Сехет шуче |
|---|---|---|
| 1 | **Аван-и шкул саккийе** Ю. Петров «Сентябрь ирĕ», Н. Теветкел «Кĕрхи кăмăл» | 1 |
| 3 | П. Михайлов «Малтанхи учителе» | 1 |
| 4 | **Килсе ситре тулах кер** Митта Ваçлейĕ «Кĕрхи илем»,<br>Г. Орлов «Сентябрь» | 1 |
| 5 | Г. Луч «Тăрнасем» | 1 |
| 6 | **Ку вал-ман таван сершыв** И.Я.Яковлев Чăваш халăхне панă Халал. | 1 |
| 7 | И. Шухши «Эпĕ- чăваш» | 1 |
| 8 | **Пирен йала-йерке** Н.Охотников «Хĕллехи кунсенче» | 1 |
| 9 | **Чаваш халах самахлахесенчен** Юмахсем. | 1 |
| 10 | Халапсем. | 1 |
| 11 | Улăп халапĕсем. | 1 |
| 12 | Ваттисен сăмахĕсем. | 1 |
| 13 | Уяв юррисем. Вăйă юррисем.<br>Сюжетлă юрăсем. | 1 |
| 14 | Халăх юррисем. | 1 |
| 15 | **Кусем- манан туссем** А. Галкин «Математика мыскари» | 1 |
| 16 | К. Груйя «Пакăлти» | 1 |
| 17 | **Ырапа усал** Л. В. Мартьянова «Чĕлхесĕр Иван» | 1 |
| 18 | П.Можаров «Хăйма вăрри». | 1 |
| 19 | **Атте анне пурри- телей тата пуянлах** Л.Смолина «Сăпка юрри», А.Смолин «Анне- пирĕн тĕнче» | 1 |
| 20 | Ю. Артамонов «Çăкăр» | 1 |
| 21 | **Суркунне ситсессен** Н.Прокопьев «Çуркунне пуçланать», К.Турхан « Çуркунне». | 1 |
| 22 | Г.Орлов «Курак». | 1 |
| 23 | Н Матвеев «Çĕр ыйхăран вăранать», С.Есенин «Сенкер май». | 1 |
| 24 | **Варса керлене чух** А.Ĕçхĕл « Ĕççинче» | 1 |
| 25 | Мусса Джалиль «Урасăр» | 1 |
| 26-30 | **Чер чунсем –пирен туссем**. Йытапа кушак. А.Калкан Лашана сални. Хв. Уяр Тарна ташши Ю. Петров-Вирьял | 4 |
| 31 | **Су пусланче** Г.Фёдоров «Çу çитрĕ». | 1 |
| 32 | Г.Орлов «Çуллахи вăрманта». | 1 |
| 33 | Вĕренӳ вĕçĕнчи тĕрĕслев. | 1 |
| 34 | КТВ Геннадий Волков «Асанне калавĕсем»Пĕтĕмлетӳ урокĕ. | 1 |